24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 НОЯБРЬ 16 ВЫРСАРНИКУН 271 (7986) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ.

Çĕршыв оборони тата медицина

Пирĕн çĕршыва хирĕç чи тискер вăрçă пуçласа ярса, фашистла захватчиксем миллионшар çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕ умне хăрушлăх кăларса тăратрĕç. Ĕçсыннисен сывлăхне сыхласси— оборона енĕпе пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç пулса тăчĕ. Çавна май вара санитариллĕ оборонăна тĕреклетес тĕлĕшпе медицина работникĕсен халĕ нихăçанхи пек мар вăйлăн ĕçлеме кирли уçăнах курăнса тăрать.

Этем пирĕн çĕршывра чи хаклă капитал пуласа тăрать, тесе вĕрентет Сталин юлташ. Çулпуçăн çак кăтартăвне фронтри медицина работникĕсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр паттăрăн кĕрешсе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Тăшман вăйлă пресе тăнă вăхăтрах вĕсем çапăçу хирĕсенчен сураннăнна красноармеецсене вĕсен хĕçпăталĕпе пĕрлех илсе тухаççĕ, хĕрӳллĕ çапăçусем пынă вăхăтрах йывăр операцисем туса ирттереççĕ, çавăнпа пĕрлех хăйсем те алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Партипе совет правительстви вĕсен ĕçне пысăк хака хурасçĕ. Фронтра ĕçлекен медицина работникĕсем хушшинче халĕ ĕнтĕ правительствăн пысăк наградисене илнисем—Совет Союз Геройĕсем, орденоносецсем сахал мар. Вĕсем фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕ тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă.

Тылри медицина работникĕсем те вăрçă обстановкине туйса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтсенче больницăсемпе амбулаторисен, сывлăха сыхлав пайĕсен ĕçĕ чылай лайăхланнине палăртмалла.

Хăйсен службăри ĕçне чĕререн парăнса, вăхăта шеллемесĕр туса пынисĕр пуçне, халĕ тылри медицина работникĕсем халăх хушшинче санитари пропагандине активлăн туса пыраççĕ, санитарсем хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çĕмĕрлери Ильина, Моторина тата ытти врачсем заводсенчи рабочисене санитарсем пулма тăрăшса вĕрентеççĕ. Кун пек фактсем нумай илсе кăтартма пулать.

Анчах санитариллĕ оборона ĕçне чылай лайăхлатмалла-ха. Çак ĕçĕн ответлăхне халĕ кашни ĕçсынни, кашни врачăн, кашни фельдшерăн, сестран тата ытти медицина работникĕсен пĕтĕм чĕререн туйса тăмалла.

Калас пулать, медицина работникĕсем хушшинче хальхи вăхăтăн ответлăхне туймасăр, мирлĕ шухăш-кăмăлсемпех пурăнакан çынсем те пур-ха. Çавăн пек тивĕçсĕр йăлана халех пĕтерес пулать.

Вăрçă вăхăтĕнчи условисенче, хĕллехи сивĕ çанталăкра сикекен чирсем пуçланса кайма, уйрăмăнах тиф чирĕсем сарăлма пултараççĕ. Тылра сикекен чир пуçланса кайсан, вăл фронта та часах çитме пултарать, пирĕн çĕршыва хутĕлекенсене сиенлеме пултарать. Сикекен чирсене пуçланса кайма памалла мар, вĕсемпе вăхăтра кĕрешсе пымалла,—çакă ĕнтĕ пирĕн умра тăракан пысăк задача пулать. Çак задачăна сывлăха сыхлав органĕсем хăйсем тĕллĕнех пурнăçласа шыма пултарайманнине, вĕсене пĕтĕм ĕçсыннисен активлăн пулăшса тăмалла, санитари дисциплинине вăрçă чухнехи пек пĕтĕм вăйран çирĕплетсе пымалла. Пурăнмалли çуртсенче, предприятисемпе учрежденисенче тата ытти общественнăй çуртсенче тасалăх пулмалла. Вăл çеç те мар, тата кашни ĕçсыннин хăйне таса тытмалла, час-часах мунча кĕмелле, кĕпе-йĕмсене улăштарса тăмалла, çӳçе кастармалла, кам та пулин чирлесен, ун çинчен хăвăртрах врачсене пĕлтермелле. Медицина работникĕсен вара ĕçсыннисем хушшинче санитари пропагандине туса пырассине вăйлатмалла. Вырăнти советсен исполкомĕсен ялта е хулара мунчасемпе лартас, вĕсене йĕркелĕ ĕçлеттерес тĕлĕшпе вăйлăн тăрăшмалла.

Медицина работникĕсен уйрăмăнах трахома чирне хирĕç кĕрешес ĕçе вăйлатмалла. Мĕншĕн тесен çак усал чир халĕ те пирĕн ĕçсыннисене, пирĕн тăван çĕршыв оборонине пысăк сиен кӳме пăрахмасть-ха.

Сикекен чирсене хирĕç кĕрешесси хальхи вăхăтра питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та ăна сывлăха сыхлав органĕсен боевой задача вырăнне хурса пурнăçа кĕртсе пымалла.

Анчах ăна пурнăçа кĕртме медицина кадрĕсене тăтăшах хатĕрлесе пыни кирлĕ. Кунсăр пуçне, пирĕн Хĕрлĕ Çар валли те медицина работникĕсен пысăк резервĕ пулмалла. Çак енчен илсе пăхсан, кĕске сроклă курссенче санитарсем вĕрентсе хатĕрлени питех те паха ĕç пулса тăрать. Ахальтен мар ĕнтĕ çак ĕçе пирĕн рабочисемпе колхозниксем пысăк вырăна хурса хаклаçĕ. Вĕсем производствăран уйрăлмасăр санитарсен курсĕсенче вĕренсе медицина пĕлĕвĕсене илеççĕ. Çĕмĕрлери «Большевик» заводра санитарсен курсĕнче 30 çын вĕренет. Вĕсен хушшинче заводри палламалла стахановецсем: Е. Воробьев, Ретенко, счетовод Анисимов тата ыттисем те пур. Çакăн пек курссенче республикăра çĕршер те пиншер çынсем вĕренеççĕ. Çапах та çак ĕçе малашне татах та вăйлатса пырас пулать. Сывлăха сыхлав органĕсен, профсоюз организацийĕсен ку тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар.

Вăрçă вăхăтĕнче çавăн пекех тата донорсен йышне ӳстересси питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. Çак ĕçре те пирĕн ĕçсыннисен патриотизмла çĕкленĕвĕ вăйлăн палăрать. Çĕршер те пиншер ĕçсыннисем донорсем пулма хаваласпах сырăнаççĕ, вĕсем хăйсен юнĕсене парса пирĕн мухтавлă боецсен пурнăçĕсене çăлса хăварма пулăшаççĕ. Анчах донорсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе пирĕн ырми-канми ĕçлесе пырас пулать. Вăл ĕçĕн пахалăхне кашни ĕçсыннине ăнлантарса парса, донорсен пысăк резервине туса хума тăрăшмалла.

Санитариллĕ оборонăна тĕреклетес çĕрте эмелсене перекетлĕн тата типтерлĕн тыткалани те пĕчĕк мар выраннăн тăрать. Пионерсем эмел тултармалли кĕленчесене пухас тĕлĕшпе тунă пуçарăва та вăйлатсах пыни кирлĕ.

Çапла ĕнтĕ, санитариллĕ оборонăна вăйлатас енĕпе сывлăха сыхлав органĕсен умĕнче пĕчĕк мар задачăсем тăраççĕ. Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар параденче каланă хăйĕн сăмахĕнче: «Çынсем тĕлĕшпе пирĕн резервсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай», тесе каларĕ. Çак резервсен сывлăхне сыхласа усрассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешесси—тылри медицина работникĕсен тата пĕтĕм совет общественноçĕн пысăк задачи пулса тăрать.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ, Карело-Финн ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Куусинен юлташ ноябрĕн 8-мĕшĕнче Н-ски чăсре НКВД-ăн чикĕри войскисен боецĕсене, командирĕсемпе политработникĕсене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă.

Чи малтан Хĕрлĕ Ялав орденне батальоннăй комиссар Рушев илет. Рушев юлташ—финн белогвардещинине хирĕç пынă вăрçăн участникĕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче вăл хăйĕн хăюлăхĕпе паттăрлăхне тепĕр хут кăтартнă. Рушев юлташ чăсĕ малти позицисенче тăрать. Вăл пĕрре çеç мар йывăр положение кĕрсе ӳкнĕ, анчах хăйĕн комиссарĕ ертсе пынипе яланах çĕнтерӳ тунипе тухнă.

Награда илсе, старший батальоннăй комиссар Корнилов юлташ çапла каларĕ: «Большевикла партине, совет правительствине шантарса калатăп: эпĕ малашне те юратнă çĕршыва паттăрăн хутĕлеме пулатăп. Кирлĕ пулсан, немĕн икĕленмесĕрех хамăн пурнăçа юратнă çĕршывшăн, пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташшăн паратăп».

Куусинен юлташ награда илнĕ юлташсене сывлăх сунса саламланă тата кĕске сăмах каланă:

«Пурте эпир,—тенĕ вăл,—Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ площадьре каланă сăмаха аслă çĕкленӳпе итлерĕмĕр. Сталин юлташ Германи фашизмне çĕнтермелли çула геннилĕ уçăмлăхпа кăтартса пачĕ. Немĕç империалисчĕсене тата вĕсен тарçисене—белофинн захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкар!

Пирĕн çĕршыва сĕмсĕрленсе кĕнĕ немĕç оккупанчĕсене пурне те пĕтерсе тăкмалла, тесе Сталин юлташ совет халăхĕн ячĕпе пĕлтерчĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртме пирĕн карело-финн халăхĕн те хăйĕн мĕнпур вăйне пухмалла. Эсир, пограничник-юлташсем, çав кĕрешӳре çĕнĕрен хăюлăхпа паттăрлăх кăтартасса эпĕ шанса тăратăп. Ленинăн—Сталинăн çапăçури ялавĕ айĕнче пирĕн Хĕрлĕ Çар немĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкĕ».

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче немĕçсенне 38 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 16 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 10-мĕшпе 12-мĕш хушшинче Балти тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн çар хатĕрĕсем тиенĕ 4 транспортне путарнă, çав транспортсен водоизмещенийĕ пĕтĕмпе 36 пин тонна пулнă.

Фински заливра пирĕн минăсем сине пырса тăрăнса противникăн подводнăй лодки сирпĕнсе кайса шыва путнă.

* * *

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăсĕсем, Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче кĕрешекенскерсем, немĕçсен 25 танкне, 5 бронемашинине, пехота тата çар хатĕрĕсем турттаракан 300 ытла автомашинине, 15 орудие, 25 зенитнăй точкăна, горючи тултарнă 4 автоцистернăна тата противникăн пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче çапăкаçакан пирĕн пĕр авиачăн летчикĕсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче немĕçсен пехоти ларса пыракан тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 97 автомашинăна, 12 бронемашинăна, пулеметсен вирĕ точкине, противникăн салтакĕсене 600 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансем тăшмана хăюллăн çĕмĕрсе пыраççĕ. Юлашки пилĕк кун хушшинче кăна В. хули районĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем салтаксемпе офицерсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, горючисен 2 складне çунтарса янă, 3 танка тата 2 бронемашинăна çĕмĕрнĕ.

Я. юлташ ертсе пыракан отрядăн боецĕсем В. хулин хĕррине пырса кĕнĕ те немĕçсен пысăк обозне пĕтерсе тăкнă.

Б. юлташăн отрядĕнчи партизансем Д. юханшывĕ урлă каçмалли чугунçул кĕперне аркатса тăкнă. Боеприпассем тиенĕ лавсене хӳтĕлесе пыракан немĕç отрячĕпе партизансем хушшинче çапăçу 7 сехет хушши пынă. Çак çапăçура партизансем бронемашинăна, немĕçсен 14 автомашинине взрыв туса сирпĕтсе янă, 50 салтака яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Немĕçсен фашистла мерзавецĕсем хăйсем тытса илнĕ районсенче пурăнаканскене тискеррĕн асаплантараççĕ. Калинин облаçĕнчи немĕçсем тытса илнĕ Починки ялĕнче фашистсем хресченсене ялтан тухма чарнă. Нумаях та пулмасть, вăрмантан çапă çĕклесе килекен çамрăк ачасене виçĕ çынна гитлеровецсем персе вĕлернĕ. Ватă хресчен Федулов тата хресчен хĕрарăмĕ Тихонова ачасене каçарма немĕçсенчен йăлăнса ыйтнă, çавăнпа вĕсене питех те хытă хĕненĕ те тумтирĕсене хывса илсе сивĕ сарая пăрахнă. Каçхине ӳсĕр салтаксем сарай тавра улăм хурса тухса ăна тивретсе янă.

Ивановка ялĕнче фашистсен офицерĕ хресченсен пухăвне пухнă, вĕсене Германи çарĕ валли çийĕнчех 30 тонна çĕрулми, 5 ĕне тата 20 сурăх тăратма хушнă. Хресченсем савна пурнăçа кĕртме пултарайман, мĕншĕн тесен ялта малтантарах пулнă немĕçсем халăхран продовольствипе вылăх-чĕрлĕхе пĕтĕмпех туртса илнĕ. Часах çак яла фашистсен карательнăй отрячĕ пырса çитнĕ. Ялта пурăнакансене пурне те площаде хăваласа пырса, немĕçсем кашни пиллĕкмĕш çыннах, çав шутра хĕрарăмсемпе ачасене те, персе вĕлернĕ. Ун хыççăн яла пур енчен те вут тивретсе янă, чĕрĕ юлнă хресченсене отряд концентрацийлĕ лагере илсе кайнă.

* * *

Хĕвелтухăç фронтĕнчен аманнисене нумайрах та нумайрах илсе килме лекнĕ пирки, Норвегин чылай хулисенче немĕçсем çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсене госпитальсем валли йышăнаççĕ. Тронхейм тата Наксу хулисенче уйрăм çынсен вуннăр çурчĕсене госпитальсем тума туртса илнĕ. Германи влаçĕсем унта пурăнакансенчен кроватьсем, çивиттисем тата минтерсем массăллăн туртса илме пуçланă. Юлашки кунсенче Норвегие илсе пынă аманнă немĕçсем хушшинче аллисене тата урисене тăм илтернĕ салтаксем сахал мар.

Ноябрĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те çапăçусем туса пынă.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен Трофимов юлташăн авиачăсĕнчи летчиксем ноябрĕн вунă кунĕ хушшинче тăшманăнне 6 танк, çар хатĕрĕсем тиенĕ 15 вагона, 22 зенитнăй оруди, зенитнăй пулеметсен 7 установкине, 10 миномет, пулеметсен 5 йăвине, боеприпассем тиенĕ 17 грузовой автомашинăна тата немĕç пехотин виçĕ фотине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец-связист Кузнецов юлташ полкăн пĕр батальонĕпе сыхăну йĕркеленĕ чухне сывăхра немĕçсен боеприпассем тиенĕ лавĕсем пынине асăрханă. Аппарата линипе пĕрлештерсе, Кузнецов юлташ пуктпа сыхăнă та вăл хăй тăракан вырăна пеме хушнă. Артиллерирен тĕл персе немĕçсен лавĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Геройсвязист сывах юлнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн тĕрлĕ участокĕсенче юлашки кунсенче фашистсен пысăк ушкăнĕсене тыткăна илнĕ. Вараланса пĕтнĕ, сухалĕсене ӳстерсе янă тата тумтирсене çĕтсе пĕтернĕ немĕçсем пĕрре те регулярнăй çарти салтаксем пек мар, çалкаланчăксем пек курăнаççĕ. Пехотăн 30-мĕш дивизинчи 46-мĕш полкри тыткăна илнĕ ефрейтор Р. Кляус çапла каласа парать: «Вырăсен хĕлĕ эпир шухăшланкинчен хăрушăрах пулни палăрчĕ. Ăшă тумтирсем пирĕн çук. Эпир сивĕпе шăпса хытатпăр. Икĕ уйăх ĕнтĕ кĕпе-йĕме улăштарман, çăвăнман. Пыйтăсем çисе яраççĕ, кĕçĕ сиксе тухрĕ».

6-мĕш полкри тыткăна лекнĕ старший стрелок Ян Людвиг çапла калать: «..Манăн текех вăрçма вай та, кăмăл та çук. Пирĕн дивизи пĕрмаях çапăçура пулать, вăл пĕрре те канман. Пирĕн мĕнпур йывăрлăхсемпе асапсем çумне халĕ вырăс хĕлĕ хутшăнтĕ. Çакна вара эпĕ чăтма пултараймастăп.» Артиллерин 30-мĕш полкĕнчи ефрейтор А. Карстен каласа панă тăрăх, салтаксем хушшинче вăрçă çине тарăхасси вăйлăн ӳссе пырать. «Манăн нумай юлташсем вилчĕç ĕнтĕ, — тет Карстен. —Мĕншĕн хучĕç-ха вĕсем хăйсен пуçĕсене? Мĕншĕн вăрçатăп эпĕ,—хам та пĕлместĕп. Çĕмĕрсе тăкнă тата çунакан ялсене эпĕ нумай куртăм. Пиншер çынсем кил-çуртсăр тата пурлăхсăр тăрса юлаççĕ. Пире, немĕç рабочийĕсемпе хресченĕсене, çак вăрçă кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вăл пирĕншĕн çăмăллăх илсе килмест. Пирĕн ротăра резервистсем нумай, вĕсем пурте çапла шутлаççĕ».

* * *

Киров облаçĕнчи рабочисем, колхозниксемпе интеллигентсем Германи захватчикĕсене пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара паттăрăн ĕçлесе пулăшаççĕ. «Кировский металлист» заводăн коллективĕ октябрьти плана 20 процент ирттерсе тултарнă. Н-ски предприятин директорĕ Гетен юлташ темиçе кун хушшинчех оборона предприятисем валли кирлĕ лаксене туса кăларассине организацинленĕ. Песковскри чугун шăратакан заводăн коллективĕ чылай станоксене юсаса ĕçе янă. Облаçри колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем ĕçри паттăрлăхăн питех те паллă тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Кырчански районра 40 колхоз аш-какай тăратмалли çулталăкри плана тултарнă. Облаçри 500 ытла колхозсем мĕнпе май килнĕ çамăнпа Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшаççĕ. Кильмезски районри Костылевски колхоз Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли кĕрĕк пиншаксем çĕлеме 500 тир туса хатĕрленĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ ПРОФСОЮЗСЕН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМĔ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ АНГЛИРИ ПРОФСОЮЗСЕМ ХУШШИНЧЕ ТУНА КИЛĔШĔВЕ ÇИРĔПЛЕТНĔ

Пĕтĕм Союзри Профсоюзсен Центральный Совечĕн президиумĕ çак кунсенче ятарласа пулса иртнĕ ларура Англипе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕн пĕрремĕш сессин ĕçĕсем çинчен совет делегацийĕ пĕлтернине итленĕ тата çав асăннă сессире Англипе Совет Союзĕнчи профсоюзсем хушшинче килĕшӳ туса йышăннине çирĕплетнĕ.

Çав килĕшӳ, 8 пунктран тăраканскер, гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Англири профдвижениепе пĕрле, пĕр-пĕрне пулăшса пырса ĕçлеме май парать. (ТАСС).

АНГЛИРИ ТРЕД-ЮНИОНСЕН ГЕНЕР АЛЬНАЙ СОВЕЧĔ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ АНГЛИРИ ПРОФСОЮЗСЕМ ХУШШИНЧЕ ТУНА КИЛĔШĔВЕ ÇИРĔПЛЕТНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англири тред-юнионсен конгресĕн генеральнăй Совечĕ хăйĕн Лондонра ятарласа пухнă ларăвĕнче Совет Союзĕпе Англи профсоюзĕсем хушшинче тунă килĕшӳве официальнăй йĕркепе çирĕплетнĕ. Совет Союзĕпе Англири профсоюзсен комитечĕн Мускавра 1941 çулти октябрĕн 13-мĕшпе 15-мĕш хушшинче пулса иртнĕ пĕрремĕш сессийĕнче тунă килĕшӳ 8 пунктран тăрать. Гитлерла Германие хирĕç вăрçă пынă условисенче çав килĕшӳ тăрăх Англи профсоюзĕсемпе Совет Союзĕнчи профсоюзсен пĕр-пĕрне пулăшса пымалла тата пĕр-пĕринпе таччăн сыхăнса ĕçлемелле, тесе каласа татăлнă.

Сталин юлташ Польша посолне Кот господина йышăннă

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче Кремльре ССР Союзĕн Совнарком председателĕ Сталин юлташ Польша посолне Кот господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ пулнă. Калаçу икĕ сехет пынă.

Йăлтах фронт салли! Йăлтах тăшмана çĕнтерес ĕç валли!

Октябрьски районри „Большевик“ промартелĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвĕ

Сталин юлташăн выступленийĕсем çине ответлесе, Октябрьски районри «Большевик» промартелĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухма тытăннă. Вĕсем Чăваш АССР Республикинчи комсомолецсене, çамрăксене тата мĕнпур ĕçсыннисене çак паха ĕç валли укçа-тенкĕ пама чĕнсе çыру çырнă.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ çак пуçарăва ырланă, комсомолăн пуçламăш организацисене тата комитетсене çак пуçарăва йышăнса илсе комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче тата пĕтĕм халăх хушшинче бронепоезда тума халех укçа-тенкĕ пухмашкăн тытăнма хушнă. Аяларахра эпир «Большевик» промартелĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен çырăвне пичетлетпĕр.

Октябрьски районри „Большевик“ промартелĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем Чăваш АССР Республикинчи комсомолецсене, çамрăксене тата ĕçсыннисене пурне те чĕнсе калани

Совет халăхĕн тата малта пыракан пĕтĕм этемлĕхĕн ылханлă тăшманне хирĕç — Германи фашизмне хирĕç пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ пиллĕкмĕш уйăх ĕнтĕ халăрăн кĕрешеççĕ. Миллионшар совет патриочĕсем фронта тухса кайрĕç. Вĕсем алла хĕçпăшал тытса пирĕн тăван çĕршыва, унăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне хăюллăн та паттăрăн хӳтĕлеççĕ. Тылра юлнисем станоксемпе тата колхозсен уйăрĕсенче ывăнма пĕлмесĕр, вăхăта-мĕне пăхса тăмасăр паттăрăн ĕçлесе пыраççĕ.

Сталин юлташ пур предприятисене те вăйлăн ĕçлеттерме, винтовкăсемпе пулеметсем, тупăсем, самолетсем, патронсем, снарядсем туса кăларассине пур майсемпе те ӳстерме, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пĕтĕм вăйпа пулăшса пыма чĕнсе калани кашни совет патриочĕн чĕрине кĕрсе вырнаçрĕ. Халĕ пурте йăлтах фронт валли ĕçлеççĕ.

Тăван çĕршыв кашнинех çапла тума хушать: малти позицисенче боецсем хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр кĕрешнĕ пек хăвăн пĕтĕм вăйна хурса ĕçле, фронт валли мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăр, тăван çĕршыв умĕнчи хăвăн тивĕçлĕхе пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕрт.

Фронтпа тыл пирĕн тачă пĕрлешсе тăраççĕ. Кунсеренех вĕсен çыхăнăвĕ çирĕпленсе пырать. Хĕрлĕ полксем валли хĕçпăшалсем, лайăх пахалăхлă тата йышлă хĕçпăшалсем кирлĕ.

Эпир, Октябрьски районри «Большевик» промартелĕнчи çĕвĕ çĕлекен тата атă-пушмаксем хатĕрлекен цехсенчи комсомолецсемпе çамрăк рабочисем, Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ ĕçсыннисен депутатчĕсен Мускаври Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклада сӳтсе-явнă хыççăн, танксене хирĕç пемелли тата ытти хĕçпăшалсем туса кăларассине ӳстерни питех те кирлине пĕтĕмĕшпех ăнланса илсе, «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе тытăнма йышăнтăмăр.

Пирĕн артельре пĕтĕмпе 4 комсомолец тата союзра тăман çамрăксем пур. Эпир 211 тенкĕ пухрăмăр та ĕнтĕ. Чăваш АССР Республикинчи мĕнпур комсомолецсене, çамрăксене тата халăха эпир пирĕн примера йышăнса илме чĕнетпĕр.

Эпир ĕçлесе тупнă укçа-тенкĕ броня ăшне кĕрсе ларнă çĕлен-калтасене — нимĕçсен фашистла йыттисене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пуläăтăр.

Йăлтах фронт валли, йăлтах тăшмана çĕнтерес ĕç валли!

Совет Союзĕнчи халăхсене чуралантарма тата çаратса пĕтерме халсăнакан немĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕ хушнипе алă пуснă:
К. ОСАНОВА (ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ), Н. ИВАНОВ, И. КОГЕРЕВА, Ф. ВАСИЛЬЕВ, Л. ЕФРЕМОВ, Н. ВОЛКОВА, ТИВЛЕКЕЕВА.

Çулпуç сăмахĕсем республикăри ĕçсыннисене ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме мобилизацилеççĕ

Колхозниксен хастарлăхĕ çĕкленчĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, ноябрĕн 14-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри ĕçсыннисем Сталин юлташ докладне пичетленĕ хаçатсене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ. Халĕ агитаторсемпе вулавçăсем кашни колхозра, шкулта тата учрежденире доклад çинчен ăнлантарса параççĕ. Ăнлантару ĕçне кулленхи ĕçсемпе çыхăнтараççĕ, умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилеççĕ.

Çак кунсенче машинно-тракторлăх станцинче ĕçлекенсем пухăнăв пулса иртрĕ. Пухура Сталин юлташ докладне ăнлантарса пачĕç тата палăнхи ĕçсем çинчен сӳтсе-явăрç. МТС каçал тракторсемпе ĕçлемелли плана ноябрĕн 10-мĕшпе 94 процент тултарнă. Тракторсемпе ытти машинăсене юсама çирĕп график тунă. Çав график тăрăх октябрь уйăхĕнче 8 трактор юсамалла пулнă. Октябрь уявĕ умĕн ăмăртса ĕçленĕ май, 15 трактор юсаса кăларнă. Ноябрь уйăхĕнче 12 трактортан 5 тракторне юсанă.

Çулпуç сăмахĕсем трактористсемпе машинистсене татах та вăйлăнрах ĕçлеме хавхалантарчĕç.

— Пирĕн вирсĕмĕш бригада,—терĕ бригадир А. Елагин юлташ пухура сăмах илсе, — каçалхи ĕçсен планне ытлашшипех тултарчĕ. Октябрь уявĕ тĕлне 2 трактор юсанă. Сталин юлташ сăмахĕ çине ответлесе, декабрĕн 1-мĕш тĕлне пур тракторсене те юсаса пĕтерме пулатпăр.

Çакăн пек обязательствăсем Пыркинпа Коновалов юлташсен бригадисем те илчĕç.

Çитĕнӳсем тума хавхаланаççĕ

— Аслă Сталин юлташăн сăмахĕ пире татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Эпир фашистла захватчиксене хăвăртрах çапса çĕмĕрме тăван Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшса пыма хатĕр,—терĕç древкомбинатри çамрăк рабочисем.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Октябрь уявĕ ячĕпе Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада итленĕ хыççăн çамрăк рабочисем хушшинче ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе социализмла ăмăрту сарăлса пырать. Пиллĕкмĕш номерлĕ цехра стахановецсем Липатов, Тараканов, Николай тата Петр Сергунин юлташсем юлашки вăхăта нормăна 2 хут ӳстерсе тултараççĕ. Вĕсем яланах пĕр браксăр, простой тумасăр ĕçлеççĕ.

Ултăмĕш номерлĕ цехри сборщик Николай Горланов отечественнăй вăрçă кунĕсенче ĕç нормине куллен икшер хут ӳстерсе тултарать. Нумаях та пулмасть ăна урăх заказсем тунă çĕре куçарнă. Çамрăк рабочи çĕнĕ ĕçĕн технологине хăвăрт вĕренсе çитнĕ. Ноябрĕн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче вăл нормăна 133 процент ытла тултарнă.

— Сталин юлташ пире фронта пулăшса пырассине вăйлатма хушать. Малашне эпĕ куллен виçĕ норма тултарса ĕçлеме пулатăп,—тет Горланов юлташ. Кашни рабочипе работница, Сталин юлташăн çапла сăмахĕсемпе хавхаланса, çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем туса ĕçлеме тăрăшать.

Х. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефонпа, хамăр корр.).

Çĕнĕ вăйпа

ÇĔРПУ. Сталин юлташăн историллĕ докладĕпе сăмахĕ ĕçсыннисене производствăра тухăçлăн ĕçлеме, фронта пулăшас ĕçе вăйлатма çĕнĕ вăй хушса пачĕç. Ĕçсыннисем çак кунсенче оборона фондне темиçе пин тенкĕ укçан, 12,230 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу тата ытти те нумай пачĕç. Унăн пуçне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 10 тир, 4 çĕлĕк, 19 фуфайка, ватка хурса çĕленĕ 4 брюки, 80 мăшăр тăла, 700 мăшăр алшăш-чăлхасем пухса пачĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли паянхи куна районри комиссин складне 2.410 тир, 224 çĕлĕк, 605 мăшăр чăлха, 815 мăшăр алшăш, 159 фуфайка, 124 брюки, 332 алшăллă, 650 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, 60 шарф, 39 свитер т. ыт. те пухнă. Районри комисси пухăннă çăмăн 461 мăшăр çăматă йăвалаттарнă, тутарнă тирсенчен 51 кĕрĕк, 40 мăшăр алса çĕлеттернĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç халĕ те хĕрсех пырать. Ĕçсыннисем урнă тăшмана тĕп тăвас пухăш-кăмăлпа фронта пулăмас ĕçе кулленех вăйлатса пыраççĕ.

Гр. ПЕТРОВ

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Фронтăн Ленинград участокĕнчи çапăçусем

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧЕ, ноябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Ленинград фрончĕн Н-ски участокĕнче Андреев юлташăн подразделенийĕ фашистсен çирĕплетнĕ позицийĕсем çине атакăна кĕрсе кайнă. Наступлени пуçласа яриччен пирĕн бомбардировочнăй тата штурмовой авиаци немĕçсен çак вырăнти оборонин малти хĕррине массăллăн пыра-пыра çапнă. Артиллеристсем вăйлăн, перçе тăрса пулăшнипе, Андреев юлташăн пехотинецĕсем, тăшман хаярăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, фашистсене çавăрса илнĕ те, çул çине тухса малалла кайса пынă. Каç умĕн вĕсем хăйсем йышăннă рубежсенче çирĕпленсе ларнă. Енер тул çутăлас умĕн çапăçу çĕнĕрен пуçланнă. Фашистсем çухатнă позицине каялла тавăрасшăн тăрăшаççĕ, анчах вĕсен ĕçĕсем ăнăçсăр. Пуçарулăх енерхи пекех пирĕнисен аллинче. Фронтăн çак участокĕнче çапăçусем малалла пыраççĕ.

Çанталăк тĕтреллĕ тăрать пулин те, пирĕн авиаци пысăк активлăхпа ĕçлет. Артиллеристсем тăшман укрепленийĕсем çине ăнăçлăн тапăнаççĕ.

Енерхи атака вăхăтĕнче немĕç парашютистĕсен-истребителĕсен 2-мĕш полкĕн 11-мĕш батальонĕнчи 3-мĕш ротăн старший ефрейторне Вольфганг Клейна тыткăна илнĕ. Германи çарĕн старший ефрейторĕ çине пăхма та шел, кичем. Вăл çуллахи пилоткăпа летчиксен комбинезонне тăхăнса яна, шăнса кайнăскер, пĕтĕм шăмшакĕпе чĕтрет. Çак гитлерла сĕтĕрĕнчĕ Польшăра, Норвегире тата Голландире пулма ĕлкĕрнĕ, Крит утравĕ çине аннă парашютнăй десантра пулнă. Хăйĕн «чаплă ĕçĕсемшĕн» çак фашист икĕ тимĕр хĕрес орденĕ илнĕ. Клейн тăнă полка Ленинград фронтне октябрь уйăхĕн варринче илсе килнĕ. Хăйсен часĕсенчи çухатусем вырăнне тултармалли подкрепленисене немĕçсен командованийĕ транспортнăй самолетсемпе илсе килнĕ. Çухатусем çавтери пысăк пулнă пирки, квалификациллĕ парашютистсене Лют генерал-майорăн танковăй дивизийĕнче ирĕксĕрех ахаль пехотинецсем вырăнĕнче çапăçтарма лекнĕ.

Совет артиллеристĕсемпе летчикĕсен вут-çулăмĕ Ленинград патне пыма тăлпăнакан фашистсене чылай пысăк çухатусем кӳрет. Парашютнăй полк та пит пысăк çухатусем тӳснĕ. Полкăн пĕрремĕш батальонĕ малти позицине ноябрĕн 3-мĕшĕнче çитнĕ. Вăл кунта çапăçусенче сайралса юлнă тата ывăнса çитнĕ тĕпĕр икĕ батальон вырăнне йышăннă. Анчах çапăçусене кĕрсе кайса пĕр эрне хушшинче çак батальонра 115 салтак вырăнне мĕн пурĕ те 45 салтак кăна тăрса юлнă. Нумай ротăсенче пĕрер офицер кăна шутланать. Сивĕсем те хăйсене палăрта пуçларĕç. Противник часĕсенче тăм илнипе сураннисем нумай. Парусинăран тунă комбинезонпа аран-аран чăркаланкаласа, тыткăнри Вольфганг Клейн, пуçне чиксе, çакна йышăнать: вырăс хĕлĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене кăмăла килмест иккен.

Коммунистсемпе комсомолецсен çапăçури примерĕ

МАЛО-ЯРОСЛАВЕЦ ЕНĔ, ноябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Фронтăн кунти участокĕнче артиллери дуэлĕ пырать. Голубев командир артиллеристсĕм иртнĕ талăк хушшинче противник мотопехоти пухăнса тăнă вырăнсем çинелле вăйлăн персе тăнă, Г. пунктран сурçĕререх тăшманăн батарейине пусарса лартнă. Нимĕç пехотин пĕчĕк групписем наступлени тума хăтланса пăхнă, анчах вĕсене каялла сирсе пăрахнă. Й-ски часть О. пунктран сурçĕр-хĕвелтухăçнелле выртакан высотана йышăнса илнĕ.

Тăван çĕршывăн пыракан кĕрешӳре коммунистсемпе комсомолецсем чăтăмлăхпа героизм примерĕсене кăтартаççĕ. К. ялĕ сывăхĕнче немĕçсем паха высотана йышăнса çирĕпленсе ларнă. Тул çутăласпа çак высотăран Озеров комиссар боецсене тăвăллă атакăна ертсе кайнă. Хĕрӳллĕ çапăçу пуçланнă. Фашистсем минометсенчен, пулеметсенчен, противотанковăй орудисенчен вăйлăн пеме тытăннă. Анчах вĕсене кун пек вут-çулăм та пулăшман. Боецсем тăшман çине арăслансем пек пырса тапăннă, ăна кашни укрепленирен хирсе кăларнă. Йĕриташ варри мĕнпур вырăнсенчен те çӳлте тăракан высотана немĕçсен пăрахса хăварма лекнĕ. Çак атакăра пирĕнисем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем хушшинче немĕçсен пулеметсемпе миномĕтсем нумай тата çăр ялавĕ илнĕ.

Чи хĕрӳллĕ çапăçу пынă вăхăтра пирĕн командăй пунктпа сыхăну татăлса кайнă. Çапăçăва сыхăнусăр ертсе пыма май çук. Лару-тăру йывăрланнă. Решетов коммуниста командир: — Сыхăну линине халех юсамалла, тесе приказ панă. — Есть, сыхăну линине халех юсамалла, — тесе ответленĕ Решетов.

Провод немĕçсем миномĕтсенчен тăвăллăн персе тăракан вырăнта татăлса кайнă пулнă. Унта та, кунта та минăсем, снарядсем сурăлнă, пулăсем шăхăрса вĕçнĕ. Решетов, ниме пăхмасăр, татăлнă тĕле шыраса тупнă та провод хушса сыпнă, çапла сыхăну линине юсанă.

Краснов командир часĕнчи сапер Делибазов комсомолец тăшман тылĕнчи çул çине минăсем лартса тухма приказ илнĕ. Ку çула немĕç мотоциклисчĕсен отрячĕ сыхласа тăнă. Делибазов ертсе пыракан бригада пит лайăх маскировка тунă та, çав çул çине минăсем хурса тухнă. Пĕр икĕ-виç сехет иртсен минăсем лартса тухнă тĕле çитсе кĕнĕ фашистсен автомашинисем кĕмсĕртеттерсе сывлăша сирпĕнсе хăпарнине пирĕн боецсем лайăх курса тăнă.

Немĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе килни

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче кăнтăрла немĕç самолечĕсен темиçе пысăк группи Мускав çине вĕçсе килме хăтланнă. Мускав сывăхĕнче тăшман самолечĕсене пирĕн истребительсем тата зенитнăй батарейăсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ.

Сывлăшра пулнă пысăк çапăçусенче тата пирĕн зениткăсенчен персе немĕçсен 31 самолетне çапса антарнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ. Хула районне вĕçсе кĕнĕ пĕчченшер самолетсем çар объекчĕсем пулман вырăнсенче фугаснăй бомбăсем тĕлли-паллисĕр пăрахнă. Пулнă сиен пысăк мар.

Итальянецсен пысăк çухатăвĕсем

КАНТĂР ФРОНЧЕ, ноябрĕн 13-мĕш. (Телеграф тăрăх). Юлашки кунсенче Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче Итали войскисем темиçе хутчен те пирĕн оборонăна шăтарса кĕме хăтланса пăхрĕç. Анчах та итальянецсем наступлени тума хăтланнине пирĕн Хĕрлĕ Çар часĕсем хаярăн та паттăрлăн сирсе пăрахса пычĕç.

Енер Итали захватчикĕсем К. местечко районĕнчи наступление хăйсен пехотине полк çурă таран кĕртсе ячĕç. Наступлени тăвакан колоннăсем çине пирĕн артиллери вăйлă пеме тытăнчĕ. Шавердин юлташăн часĕнчи артиллеристсем тĕл персе, итальянецсен атакине чарса лартрĕç, лешсем хăйсем малтан йышăнса тăнă позицие чакса кайрĕç. Нумай мар вăхăт иртсен, итальянецсен часĕсем каллех наступлени пуçласа ячĕç. Вĕсем тĕрлĕ енчен колоннăсемпе пычĕç, К. местечкăна Н. чугунçул узелне тытса илесшĕн пулчĕç.

Итальянецсен пĕр колонни нумай малалла пуса тухрĕ. Сасартăк фашистсем çине хыçалти вăрмантан пеме пуçларĕç. Çав вăрманта пирĕннисем засадăра лараççĕ. Засадăри Сидоров юлташ боецĕсем итальянецсем çине станковăй тата ручной пулеметсенчен, автоматсемпе винтовкăсенчен вилĕм вучĕ тăкма пуçларĕç. Фашистсем хушшинче паника пуçланса кайрĕ. Итали воякĕсем, аманнисене хăйсем хыççăн сĕтĕрсе, каялла тарма пикеннĕ. Çав вăхăтрах итальянецсен тепĕр колонни çине Шавердин юлташăн артиллеристĕсем çил-тăвăлла вут-çулăм тăкма тытăннă. Пирĕн чассен боецĕсемпе командирĕсем контратакăна кĕрсе кайнă. Итальянецсем, хăйсене хирĕç хăватлăн пырса çапнине тӳсеймесĕр, каялла, малтанхи позицие чакса кайрĕç. Çак кун çапăçу хирĕнче вĕсем хăйсен вилнĕ е аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене 550 çын пăрахса хăварнă.

Икĕ кун çапăçнă хыççăн фронтăн çав участокĕнче итальянецсен мĕнпурĕ 2.500 çын пĕтнĕ, вĕсенчен вилнисем 1.100 çын, аманнисем 1.400 çын. Çак икĕ кунхи çапăçусенче Шавердин юлташ часĕсем тăшманăнне 14 станковăй пулемет, 50 винтовка, патронсем, противогазсем, ранецсем тата ытти снаряженисем нумай тытса илнĕ.

Кăнтăр фрончĕн ытти участокĕсенче разведкăллă çапăçусем пыраççĕ. Енер немĕçсем Н. районĕнче разведка тума пехотинецсене 10 автомашинăпа янă. Фашистла лазутчиксем çине пирĕннисем артиллеристсем боевой заданисене хăйсен пуçĕсене шеллемесĕр пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем тăшманăн огневой точкисене ăнăçлăн аркатаççĕ, урамсенчи çапăçусен йывăр условийĕсенче пехотăна малалла куçма çул уçса параççĕ.

Политрук В. МИНАЕВ.

Совет самолечĕсем Кенигсбергпа Рига çине вĕçсе кайни

Ноябрĕн 14-мĕш иран тенĕ чух çĕрле совет самолечĕсем Кенигсберг тата Рига хулисем çине вĕçсе кайса тапăннă. Çак хуласенчи çар объекчĕсем çине вут тивретекен тата фугаснăй бомбăсем пăрахнă. Пушарсемпе взрывсем пулнине палăртнă.

ПРОЛЕТАРИЛЛЕ ПОЛКОВОДЕЦ

(Совет Союзĕн маршалĕ С. К. ТИМОШЕНКО)

Фурманка ялне самолет анса ларчĕ. Ун ăшĕнчен Семен Константинович Тимошенкопа Никита Сергеевич Хрущев тухрĕç. Кунта вĕсем Румыни боярĕсен пусмăрĕнчен хăтарса ирĕке кăларнă Бессарабири ял çынни сене саламлама тата Семен Константиновичăн тăван пиччĕшĕпе курнаçса калаçма вĕçсе килнĕ. Семен Константиновичпа пиччĕшĕ пĕрне-пĕри 22 çул хушши курмасăр пурăннă. Халĕ вĕсем пĕр-пĕрин аллине хытă чăмăртаса, ыталаса илсе чуптунă.

Çак кун вĕсем пиччĕшĕпе шăллĕ тĕл пулнă. Вĕсенчен пĕри Бессарабире румынсем хуçа пулса пурăннă чухнехи мĕнпур асаплăхпа хĕнхура тӳссе ирттернĕ, вăл хут вĕренме пултарайман, лăпкă та мĕскĕн хресчен пулса юлнă. Иртнĕ 22 çул хушшинчи пурнăçĕ çинчен аса илмешкĕн те ăна йывăр, çак вăхăт хушшинче унăн пурнăçĕнче пĕр телейлĕ кун та пулман. Вĕсенчен тепри çак вăхăт хушшинче бĕлшевик пулса тăнă, совет влаçĕшĕн паттăрран кĕрешнĕ, рядовой боецран вăл Совет Союзĕн маршалĕ пулса тăнă.

Империализмлă вăрçă вăхăтĕнче çаре кайнă хыççăн Семен Константинович тăван ялне урăх пĕрре те тавăрăнман. С. К. Тимошенко пулнă кавалерин тăваттăмĕш дивизийĕ 1917 çулта совет влаçĕ енне куçнă. Ленин панă распоряжени тăрăх çак дивизие Çурçĕр Кавказа куçарнă. Вăл дивизи вара хăйĕн походне Каледин генералăн контрреволюциллĕ часĕсене çĕмĕрсе тăкнине вĕçленĕ.

1918 çул пуçламăшĕнче Семен Константинович демобилизацине çартан тухнă. Анчах вăл тăван ялне кайман, пуринчен малтан пуçласа вăл Хура тинĕс таврашĕнче çапăçакан партизансен отрядне кĕнĕ. Кунта вăл хăйĕн ĕçне аван пĕлнипе, çирĕп те паттăр пулнипе уйрăмăнах палăрнă, çакна пула ăна часах командира лартнă. Малтан партизансем ăна взвод командирне, унтан вара эскадрон командирне суйланă. Партизансен отряднĕнчен полк тусан С. К. Тимошенко унăн командирĕ пулса тăнă.

Çул çинче пур тăшмансене те çĕмĕрсе, Тимошенко юлташ хăйĕн полкне Царицын патне илсе пынă. Вĕçренех çапăçусем пулнă. Хăйĕн ĕçне пĕлсе тăвакан паттăр командир тăшмана яланах хытă çĕмĕрнĕ. Царицына ситсен те полкăн вăй-халĕ пĕрре те чакман. Вăл çийĕнчех шурриссене хирĕç çапăçма тухнă.

Утлă Хĕрлĕ Çар çапăçусенче пысăк выран йышăнса тăнă. Сталин юлташ ертсе пынипе вăл ӳссех пынă. Вара часах С. К. Тимошенкона утлă çарăн иккĕмĕш уйрăм бригадин пуçлăхĕ пулма, унтан утлă çарăн улттăмĕш дивизин пуçлăхĕ пулма уйăрса лартнă.

Дивизин çамрăк командирĕ (ун чухне Тимошенко юлташ пурĕ те 24 çулта çеç пулнă) хăйĕн умĕнче мĕнле задача тăнине ӳçăнах ăнланса тăнă. Дивизине ертсе пыма пуçлас умĕн вăл хăйĕн приказĕнче çапла сырнă:

«Пур çапăçусенче те çул кăтартса пыракан çăлтăр вырăнне пĕр шухăш—белогвардеецсен бандисене тĕпренех çĕмĕрсе, хăвăртрах çĕнĕ пурнăç тума тытăнас шухăш пулмалла. Çак шухăш тавра пĕтĕм комсоставпа боецсен ĕмĕчĕсене пĕтĕçтермелле. Пурте пĕр шухăхлă пулса пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленипе эсир никам çĕнтерейми хурçа хӳме пек пулса тăратăр, çав хӳмене пырса çапнипе вара контрреволюцин темĕнле вăйĕ те арканса кайĕ»

Дивизин ялавĕсем пур çапăçусенче те мухтавлăн вĕлкĕшсе хисеплĕ вырăнта тăнă. Çав ялавсемпе дивизи Касторная патĕнче белогвардеецсене çĕмĕрсе тăкнă, çав ялавсемпех вăл Дон шывĕ çинчи Ростов хулишĕн «Генеральнăй мост» ятлă станци патĕнче паттăррăн çапăçнă.

...Ростов хули патĕнче дивизи Маманов ертсе пынă. Хăйсен çулĕ çинче Шкуро генералсен çĕнĕрен çыпçăнсем хушса ӳстернĕ корпусĕсемпе тĕл пулнă та, малалла куçса пынă хушăрах вĕсенчен иккĕшне атакăласа çĕмĕрсе тăкнă. Дивизи çине тапăнас тесе, Шкуро генерал хăйĕн утлă çарне пĕр çĕре пĕтĕçтерме тăрăшнине сиссенех Тимошенко юлташ никама систермесĕр хăйĕн икĕ полкне тимĕр кăмăл евĕрлех çавăрса илнĕ. Çакăн хыççăн вара шурă кавалеристсенчен хăшпĕрисем кăна çăлăнса юлнă.

1920 çулти августра Тимошенко юлташа кавалерин тăваттăмĕш дивизи начальникне лартнă. Çак дивизи Крымра Врангеле çĕмĕрсе тăкас çĕрте паттăррăн çапăçнă. Çавтери вăйлă çапăçура дивизи начальникне икĕ хутчен амантнă. Ана ытти фронтсенче те темиçе хутчен те амантнă, анчах нихăçан та вăл çапăçу хирне пăрахса кайман.

Граждан вăрçи иртнĕ хыççăнхи çулсенче Тимошенко юлташ тăрăшсах вĕренет. Вăл, военно-политически академире вĕренсе, хăйĕн пĕлĕвĕсемпе опычĕсене ӳстерсе пырать. Темиçе çултанах вăл Киеври уйрăм çар округĕн командующийĕ пулать, Хĕвеланăç Украинăри халăхсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе çапăçусене ертсе пырать. Белофинсем пирĕн Хĕрлĕ Çăран вăйхăватне хавшатас тесе çапăçма пуçласан, Семен Константинович хамăран мухтавлă боецсене ертсе пырса, белобандитсемпе Маннергейм линине çĕмĕрсе тăкать.

Фашистсен захватчикĕсем пирĕн Тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнчĕç. Пĕтĕм совет халăхĕ вăрçа çĕкленчĕ. Совет çĕршывĕн никама пăхăнмалăхне, унăн ирĕкĕпе хисепне Хĕрлĕ Çар нихçан курман хăватпа тата паттăрлăхпа сыхласа тăрать. Фронтăн пĕр направленийĕнче немĕç фашизмне хирĕç пыракан геройла çапăçусене Совет Союзĕн маршалĕ Семен Константинович Тимошенко ертсе пырать.

Смоленскшăн, Ельняшăн кĕрешнĕ çапăçусем, Гитлерăн чи лайăх дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкнă чухнехи кунсем—Тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсене питех те опытлă командир пултаруллăн ертсе пынине кăтартса парааççĕ.

Большевизмăн чаплă традицийĕсем тăрăх вĕренсе воспитани илнĕ Тимошенко юлташ Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ, геройла Хĕрлĕ Çăран чаплă полководецĕ пулса тăчĕ.

Тимошенко юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çăран дивизийĕсем Тăван çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ тăшмансене тĕпренех çĕмĕрсе тăкĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă туттирсем

ШАХАСАН. Матьшӳри «Çамрăк колхозник» колхозăн членĕсем Хĕрлĕ Çар валли 34 тир, 2 мăшăр çăматă, 14 мăшăр чăлха, 2 çĕлĕк, 11 алшăлли, çăм тăласем тата пир тăласем 21 мăшăр, 2 килограмм çăм тата ытти ăпаласем панă.

Шĕкĕр ялсоветĕнчи колхозниксем 54 тир, 1 мăшăр çăматă, 26 алшăлли, 19 мăшăр чăлха, çăм тата пир тăласем 51 мăшăр, ăшă кĕпе-йĕм 4 мăшăр, 13 çĕлĕк, 24 мăшăр алшăш пухса панă.

Анчах ăшă ăпаласем пухасси пахă ĕç пулнине пурте кирлĕ пек ăнланса илмен-ха. Ялти активистсенчен хăшпĕрисем ăшă ăпаласем пухас ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Шĕкĕр ялсоветĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ Волков хăй пĕр ăпала та паман. «Акатуй» колхозăн председателĕ Г. Федоров пĕр тир кăна панă. Колхозри бригадирсем пĕчĕк ăпаласем кăна панă.

Ăшă ăпаласем пухас тĕлĕшпе массăллă-ăнлантаруллă ĕçе кирлĕ пек организацилемелле.

В. ЯКОВЛЕВ.

ШАМАРША. Çĕнĕ Шамăршăри колхозниксемпе колхозницăсем малтан 31 тир, 25 мăшăр пир тăла, 7 алшăлли, 3 çĕлĕк, 5 килограмм çăм, 3 шарф, 10 мăшăр алса Хĕрлĕ Çар валли панăччĕ. Халĕ хĕрарăмсемпе хĕрсем тата 70 мăшăр чăлха сыхаççĕ, 100 енчĕк çĕлеççĕ.

А. УХВАРИНА.

ИШЛЕЙ. Доронин ячĕпе тăракан колхозра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă туттирсем хатĕрлеме 28 тир, 16 килограмм çăм пухнă. Çавăн пекех колхоз оборона фондне 40 килограмм çу, 1 вăкăр, 1 сурăх, колхозниксем 37 чăх, 4 кăвакал тата укçан панă.

П. ПАЙКОВ.

Актив пример кăтартман çĕрте

ВĂРМАР. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă туттирсем пухас ĕçĕн ăнăçлăхĕ советпа колхоз активĕ пример кăтартнинчен те нумай килет. Анчах уйрăм ялсоветсемпе колхозсенче вĕсем пример кăтартни çук-ха. «Исварин» колхоз председателĕ И. Андреев юлташ пĕр мăшăр перчатка, ялсовет председателĕ Васильев юлташ пĕр тир, тепĕр пĕчĕк ăпала çеç панă. Вĕсене кура хăшпĕр колхозниксем носки, перчатка пек пĕчĕк ăпаласем пама, нумайĕшсем шарламасăр пурăнма пăхнă. Колхозра 102 хуçалăх. Вĕсенчен 20 хуçалăхĕ кăна ăшă туттирсем пухас ĕçе хутшăннă. Апла пулсан та, комисси председателĕ Петров юлташ ним тумасăр пурăнать. Вăл малтанхи вăхăтра бригадăсенче пĕрер пуху иртернипех ĕç пĕтнĕ, тет пулас.

Район центрĕнчи хăшпĕр учрежденисен руководителĕсем ăшă туттирсем пухас ĕçе кая юлса тытăнчĕç. Вылăхчĕрлĕх хатĕрлев конторин директорĕ Зайков юлташ парти райкомĕ аса илтернĕ хыççăн тин хускалнă. Çапах та большевикла тимлĕхпе мар, ятне тăвас тенĕ пек çеç. Апла мар пулсан, пĕтĕмпе те 7 çĕлĕк кăна пухнине мĕнпе ăнлантарса памалла?

Госбанкăн районри уйрăмĕнче ĕçлекенсем хушшинче те çак ĕç пачах ситĕлĕксĕр пулса пырать. Кунта 7 тир анчах пухнă. Комисси членĕсем агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пымаççĕ, пĕр-ик хут калаçса илнипех лăпланса ларнă.

Çӳлте асăннă руководительсен вăрçă вăхăтĕнчи ответлăха туйса илмелле те ăшă туттирсем пухас ĕçе кирлĕ пек туса пымалла.

Т. ИВАНОВ.

Калинин районĕнчи пĕр уйăх хушшинчи çапăçусем

Пĕр уйăх хушши ĕнтĕ Калинин хулине унăн сывăхĕнчи вырăнсенче пирĕн чассем немĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Калинин плацдармĕ стратегиллĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, тăшман кунта хăйĕн мотопехотин, артиллерийĕн, танкĕсен тата авиацийĕн пайтах пултра вăйĕсене илсе килчĕ. Немĕç фашисчĕсем пĕрре пырса çапса кĕске вăхăтрах пирĕн оборонăна аркатма шутланă пулнă, анчах та вĕсен ĕмĕчĕсем путланчĕç. Хĕрлĕ Çар часĕсем тăшмана хирĕç чăн-чăн геройла хĕрешсе пыраççĕ.

Калинин хули çине пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çитичченех хĕçпăшăлланнă дивизисем, танксем тата авиаци кĕрте-кĕрте ярса, немĕçсем малтанхи кунсенче пирĕн чассене пăртакçах хĕстерчĕç, анчах ку вĕсене питех те хакла ларчĕ. Пирĕн чассем çĕнĕ рубежсене хуçса çирĕпленнĕ хыççăн хăйсен оборонине пĕр уйăх ĕнтĕ çирĕппĕн тытса тăраççĕ; немĕçсен часĕсем çине хăюллă та вăйлă контратакăсем туса, вĕсем тăшмана шалтах халран ярааççĕ, халăх пурăнакан вырăнсене каялла турта-турта илеççĕ. Пирĕн чассем çав тери хăватлăн хирĕç тăнă пирки тăшманăн пайтах участоксенче оборонăна куçма лекрĕ.

Фашистсен командованийĕ халĕ Калинин районĕнче татах та пысăкрах вăйсем чăмăртать, хăйĕн сапаланчăк часĕсене çĕнĕрен группировка туса йĕркелет, разведка ĕçне çине тăрсах туса пырать. Тăшман пĕтĕм фронт тăршшипе тенĕ пекех хирти оборонăн вăйлă укрепленийĕсене туса хучĕ, нумай йышлă танксене малти рете кăларса çĕр ăшне алта-алта лартрĕ. Фашистсем вăхăтлăха ху лари чул çуртсене çирĕпленсе ларчĕç, хăшпĕр урамсемпе площадьсене минăсем лартса тата баррикадăсем туса та пăхрĕç. Çапах та Хоменко, Телков, Горячев, Шевцов командирсен часĕсем вĕсене Калинин хулин пайтах районĕсенчен хăваласа кăларса ячĕç. Халĕ вĕсем хулан çурçĕр-хĕвелтухăçне çурçĕр-хĕвеланăç енĕсенче çапăçаççĕ.

Фашистсем, шоссе çулĕ тăрăх танксемпе мотопехота илсе пырса, Марьино ятлă яла хăвăрттăн тытса илме ĕмĕтленнĕ пулнă. Çапла тунипе вĕсем Торжок çине тапăнма тата Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтне Мускавран татса илме шутланă. Немĕçсен колоннисене хирĕç пирĕн стрелковăй чассем тухрĕç. Шоссе тăрăх куçса пыракан немĕç часĕсен сулахай енне пирĕн тепĕр часть килсе çитрĕ. Противник Марьино патне сывхарса пынă чухне сылтăм енчен пирĕн çĕнĕ подразделенисем малалла шуса тухрĕç. Çапла вара немĕçсене ик енчен те пирĕн чассем çавăрса илчĕç. Виçĕ енчен пĕр вăхăтрах хĕссе пынипе пирĕн чассем противника ирĕксĕрех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Ку çапăçуран фашистсен банди вĕçерĕнсе тухма пикеннĕ, анчах та вĕçерĕнсе тухма пултараймарĕ. Автоматчиксен уйрăм ушкăнĕсем кăна çак çирĕп унăй варринчен хăтăлса тухрĕç. Ку çапăçура немĕçсенне 12 танк перçе аркатнă, 500 салтак вĕлернĕ, 200 мотоциклиста тыткăна илнĕ.

Калинин хулишĕн пыракан çапăçусенче пирĕн боецсем çар присягине чапларан та чаплăн пурнăçа кĕртнине кăтартса параççĕ. Сержант Баертулов хăйĕн расчечĕпе пĕрле фашистсен огневой точкисемпе автоматчикĕсене нимĕн хĕрхенмесĕр аркатать. Пĕр хĕрӳллĕ çапăçу вăхăтĕнче унăн расчетне стройран кăларнă пулнă. Харçăр пулеметчик пĕр пĕччен кăна, хăйĕн пулеметне вырăнтан вырăна куçарса, çĕнĕрен-çĕнĕ огневой позицисенчен персе тăнă. Баертулов пулеметран персе хӳтĕлесе тăнине пула пирĕн рота малалла ыткăнса хулан виçĕ квартална йышăннă.

Шевцов юлташ часĕ, Калинин урамĕсенче питех те хĕрӳллĕн çапăçса, тăшмана хулан çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчен сирпĕтсе кăларчĕ. Ку çапăçура Шевцов юлташăн часĕ тăшманăнне пĕр йывăр танк, виçĕ çăмăл танк, çичĕ пулемет, икĕ миномет тата темиçе мотоцикл пĕтерсе тăкнă, çапса аркатнă.

Радченкопа Иноземцев командирсен батарейисенчи артиллеристсем боевой заданисене хăйсен пуçĕсене шеллемесĕр пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем тăшманăн огневой точкисене ăнăçлăн аркатаççĕ, урамсенчи çапăçусен йывăр условийĕсенче пехотăна малалла куçма çул уçса параççĕ.

Красноармеец Дезер разведкăна кайсан противник тăнă вырăна пырса вĕлнĕ. Вăл хунта икĕ фашиста штыкпа чиксе пăрахнă, виççĕмĕшне амантнă тата икĕ ручной пулемет туртса илсе хăйĕн подразделенине тавăрăннă.

Лейтенант Чайковский ертсе пыракан батальон калама çук паттăррăн çапăçрĕ. Калинин сывăхĕнчи кĕрешӳсенче Чайковский юлташăн боецĕсем 4 кун хушшинче тăшманăнне икĕ танк, икĕ броневик, 8 автомашина, 4 противотанковăй оруди, пĕр йывăр оруди пĕтерсе тăкнă, 44 мотоцикл, горючи тиенĕ тăвата автомашина тата питĕ нумай боеприпассем тытса илнĕ.

Хаяр çапăçусенче танксене хирĕç харçăррăн кĕрешекен истребительсем çуралса тухаççĕ. Кĕçĕн лейтенант Крыловăн взвочĕ, противника пĕр ялтан хăваласа кăларса, оборонăна йышăннă. Çĕрле фашистсем, нимĕн те курăнманнипе усă курса, çак взвода хирĕç танксем кăларса янă. Крыловпа унăн боецĕсем, нимĕн хăраса ӳкмесĕрех, тăшман танкĕсемпе пехотине 20—30 метра çити сывхарма май панă та вĕсен çинелле вăйлăн пеме тытăннă. Фашистсене вĕсем тӳррĕн персе утă çулнă пек çулнă. Противник паникăна ӳксе тарма пуçланă. Тăшман çак çапăçура виçĕ танк, виçĕ бронемашина çухатнă тата унăн вилнисемпе аманнисем нумай вырса юлнă.

Кĕçĕн лейтенант Шатунов атака вăхăтĕнче немĕç офицерне штыкпа чиксе пăрахнă тата граната сыхи пăрахса фашистсен пĕр танкне юрăхсăра кăларнă.

Штрубкинпа Кожанов красноармеецсем мухтавлăхĕ пĕтĕм фронтра янраса кайрĕ. Çак паттăр боецсем танк корпусĕ çине ларса немĕçсен пулне кĕрсе кайнă та противник çине чăрсăррăн пырса тапăннă. Танк экипажне лейтенант Макаров ертсе пынă. Хăйсен çулĕ çинче вĕсем тăшманăн огневой точкисемпе пехотăн уйрăм ушкăнĕсене тупăсемпе пулеметсенчен персе пĕтерсе пынă. Танк корпусĕ çинче ларса пыракан Штрубкинпа Кожанов красноармеецсем немĕçсене гранатăсемпе пере-пере сирпĕнтернĕ, автоматсенчен персе тураса пынă. Харçăр красноармеецсем çак рейдра фашистсен 100 салтакне вĕлернĕ, тăшман хушшинче паника туса, вĕсен речĕсене арпаштарса янă.

Сталин юлташ сăмахĕсемпе хавхаланнă Совет воинĕсем Калинин хулине хирĕнсе кĕнĕ тăшмансене немĕн хĕрхенмесĕр пиреççĕ. Старшина Брянушин немĕçсем наступлени туса килнĕ чух хăйĕн винтовкинчен персе 10 фашиста вĕлернĕ. Красноармеец Нароков 18 немĕç салтакне кăкăртан персе вĕлернĕ, анчах та вăйсем таннар кĕрешӳре хăй те харçăр вилĕмпе вилнĕ. Ноябрĕн 9-мĕшĕнчи çапăçура лейтенант Сергеев хăй пĕччен фашистла 10 бандита персе пăрахнă.

Пирĕн артиллери тăшмана халама та çук пысăк çухатусем кӳрет. Бирюков часĕнчи мухтавлă артиллеристсем (Калинин районĕнче пыракан çапăçусенче тăшманăнне 38 танк, 101 автомашина, 18 оруди, 32 миномет, 90 пулемет пĕтерсе тăкнă, аэродромсенче тата сывлăшра 119 самолет персе аркатнă, боеприпассем усракан виçĕ склада взрыв туса сирпĕтнĕ, шыв урлă каçмалли темиçе переправăна çĕмĕрнĕ, темиçе наблюдательнăй пункта пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем тупăсенчен персе тăрса немĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 10.000 çын ытла вĕлернĕ, 6000 çынран кая мар амантнă. Çак артиллеристсем Калининри аэродром çине пĕрре пырса тапăнсах фашистсен 30 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Калининра немĕçсемшĕн пурнăç питех те хĕсĕнсе килет. Немĕçсем Калинин хули патне тĕрлĕрен подкрепленисем турттарса пыракан шоссе çулĕ çине пирĕн танксем тухса фашистсен колоннисене çине-çине çапа-çапа аркатаççĕ. Çапăçăва продовольствипе снаряженисем тăратас ĕçре немĕçсем «Юнкерс 52» йышши транспорт самолечĕсемпе анлăн усă курааççĕ. Пирĕн авиаци вĕсен рейсĕсене час-часах аркатса ярать. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче кăна Оленев часĕнчи летчиксем тăшман аэродромĕ çине пырса тапăнса тăвата транспорт самолетне аркатса тăкнă. Çав кунах тата пирĕн авиаци, пĕлĕтлĕ çанталăкпа усă курмасăрах, противник çине тапăнса, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 30 автомашинăна яхăн пĕтерсе тăкнă тата 600 салтака яхăн вĕлернĕ.

Трифонов часĕнчи летчиксем кĕске срок хушшинчех тăшманăн 21 самолетне, 75 автомашинине тата 2000 салтакне яхăн пĕтерсе тăкнă.

Калинин районĕнче çапăçусем халĕ те пĕр тамалмасăрах хаярăн пулса пыраççĕ. Юлашки кунсенче пирĕн оборонăн сылтăм флангĕнче уйрăмах вăйлă çапăçусем пуçланса кайрĕç. Тăшман урса кайсах киле-киле тапăннине пирĕн чассем мухтавлăн та паттăррăн сирсе ярса пыраççĕ. Юлашки икĕ çапăçура хăна фашистсен хунта, вилнисемпе аманнисене пĕрле шутласан, 400 çын ытла пĕтнĕ.

И. ДЕНЕНБЕРГ.

Комсомолецсен пуçарулăхĕ

— Юлташсем, каçхине авăн çапма комсомолецсенчен бригада тăвар. Пирĕн вăй ситет. Пирĕнпе пĕрле комсомолра тăман çамрăксем те ĕçлеме тухĕç, — тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне комсомолăн Куславкка районĕнчи Амзяк ялĕнчи «Динамо» колхозри пуçламĕш организацин секретарĕ М. Чуриков юлташ комсомолецсен шухăвĕнче.

— Атьăр-ха, юлташсем, чăнах йĕркелесе яраp сав ĕçе. Эпир çамрăксем каçхине авăн çапма пултаратпăр. Ку ĕçе ыран каçран пуçласа тытăнас пулать, — терĕ комсомолец Г. Рускин. Вăл пĕр ĕçе тытăнсан, ăна туса пĕтермесĕр нихăçан та чарăнса тăмасть. Ĕçе яланах тĕплĕн тăвать.

Колхозри активлă комсомолец А. Спиридонов та çав сĕнĕве ырларĕ. Комсомолецсен шухăвĕ пĕр шухăшлă пулса çĕрле авăн çапас тесе решени йышăнчĕ.

Тепĕр кунне каçхине итем çинче темиçе тĕлте электричество çутти ялкăшса тăрать. Çамрăксен аллинче ĕç вĕрет. Янăрать юрă:

Если завтра война...
Так мы пели вчера
А сегодня война наступила...

— Эй, ачасем, тимлĕрех ĕçлер! — М. Чуриков кăшкăрать. Вăл ялтанах хăй пример кăтартса, çамрăксене хавхалантарса пырать.

Нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăрçнă вăхăтра ĕçлемесĕр алла усса ларма кирлĕ маррине çамрăксем аван пĕлеççĕ. Çамрăксем пур ĕçре те малта пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ĕçре те комсомолецсем пример кăтартса пычĕç. Амаяик колхозникĕсем пурĕ 91 тир, 38,7 килограмм çăм,50 мăшăр чăлха, 50 мăшăр алшăш тата ытти тĕрлĕ япаласем пачĕç. Ку ĕçре çамрăксем сахал ĕçлеменĕ. И. Гурьянов, Чернова, И. Рускин комсомолецсем кашни колхозник патне ситсе, Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парасси çинчен ăнлантарса панă.

Авăн çапма тытăннăранпа вăхăт нумай та мар иртрĕ, пĕр пысăк капана çапса та пĕтерчĕç.

— Пĕр капан çапса пĕтертĕмĕр, тесе пĕлтерчĕ призывник комсомолец В. Рыбаков. Вăл колхозра стахановла ĕçлет, ĕçре пĕр кун та юлмасть.

— Юрать, пит аван! Халĕ ĕнтĕ эпир кăштах канăр-ха, эпĕ барабанпа электромотора тĕрĕслем — тесе пĕлтерчĕ Чуриков.

— Юлташсем, кунтарах хилĕр-ха, канмă хушăра хаçат вулар, — терĕ пĕри çамрăксен ушкăнне пырса тăрса. Аллинче «Известия» хаçат. Хаçатри хыпарсене вуласа тухнă хыççăн калаçу пуçланчĕ.

— Гитлер пире кĕске срокрах хăйĕн аллине çавăрса илме шутларĕ, анчах ĕç тухмарĕ. Ав, уксах-чăлахсене, сукăрсене Гитлер хăйĕн çарне илме пуçланă иккен.

— Пирĕн вырăс çарне ĕлĕк те никам та çĕнтереймен, халь вара эпир татах тытă тăрăпăр, — каласăка хутшăнать итем çинчи хуралçă Яков Журавлев. Вăл 1914 1918 çулсенчи вăрçăра Германие хирĕç хăйсем мĕнле çапăçни çинчен каласа кăтартать.

Унтан каллех çамрăксем хĕрÿллĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Малтанхи каçах вĕсем нормăсене 145-шер процент тултарса ĕçлерĕç.

Е. ЧЕРНОВ.

Заданисене тултарнă колхозсем

«Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» партипе правительство йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пынине пула районри чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе чаплă ситĕнÿсем турĕç. Районри 113 колхозран 25 колхозра ĕнесенчен сĕт суса илмелли çулталăкри планлă заданине 9 уйăх хушшинче тултарнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра çулталăк хушшинче кашни ĕнерен 1800 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, 9 уйăх хушшинчех 2.742 литр сĕт суса илнĕ. «Планета» колхоз кашни ĕнерен 1902 литр, «Дружба» колхоз 1637 литр суса илнĕ.

Районри 18 фермăра сысна аминсенчен çăвăрсем илсе пăхса çитĕнтермелли плана тултарнă. «Молодая сила» колхоз кашни ама пуçне 18 çăвăр илсе пăхса ÿстернĕ. Сысна пăхакан Денисов хăйне çирĕплетсе панă 6 сысна аминчен 118 çăвăр, Федоров 7 сысна аминчен 133 çăвăр тата Михайлов 8 сысна аминчен 139 çăвăр илсе пăхса ÿстернĕ. Сысна çурисене пăхса ÿстермелли плана тултарнăшăн фермăра ĕçлекенсене 1—2-шер çăвăр панă. «Новая жизнь» колхоз 24 сысна аминчен 452 çăвăр пăхса ÿстернĕ.

44 фермăра путекçем пăхса ÿстермелли плана иртерсе тултарнă. Район кашни 100 сурăх пуçне 120 путек илнĕ, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ. «Молодая сила» колхозра сурăхсем икшер хут прамланине пула кашни 100 сурăх пуçне 210 путек пăхса ÿстернĕ. «Ĕмĕт» колхоз 30 сурăхран 42 путек, «Красный бригадир» колхоз 20 сурăхран 40 путек, «Верный путь» колхоз 47 сурăхран 67 путек пăхса ÿстернĕ.

Сĕт суса илмелли, çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтермелли планлă заданисене иртерсе тултарнăшăн фермăсенчи работниксене ĕçшĕн хушса тÿлеççĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.
Çĕрлÿ райçĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ.

Тухăçлă çулталăк

КАНАШ. «Хавас» колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Колхоз каçалхи ялхуçалăх çулĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕ. Колхозăн тырпул тухăçлăхĕ уйрăмах пысăк пулчĕ, вăтам шутпа кашни гектартан 19 центнер çурă кĕркки тулă, 14 центнера яхăн çурхи тулă, 19 центнер ытларах урпа пухса кĕртнĕ.

Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартулăн вĕçлерĕ.

Колхоз правленийĕ обществăллă фондсем уйăрма тата тупăшсене ĕç кунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленет. Обществăллă фондсем уйăрнă хыççăн кашни ĕçкунĕ тăрăх виçшер килограмм тĕштырă валеçĕнет.

Колхоз йышлă выльăх-чĕрлĕх усрать. Халĕ колхозăн сĕт-çу, сурăх, сысна тата чăх-чĕп фермисем пур. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана, сурăх фермисĕр пуçне, пур фермăсем тăрăх та тултарнă. Выльăхсен продуктивноçĕ те чылаях ÿсрĕ. Планлă задани тăрăх кашни ĕнерен 800 литр сĕт суса илмелле пулнă, 1500 литр суса илнĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене яланах вăхăтра тултарса пынă. Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă тăратассине районра чи малтан пурнăçланă. Аш-какай, сĕт-çу, çăм обязательствисене те срокчен тултарнă.

Ив. МАЛОВ.

Ватă карчăк

Шурăмпуçĕ кăн-кăвакăн
Хăпарсассăн, ирсинче
Ватă карчăк тухрĕ акă
Пÿртĕнчен мар, мунчинчен.

Çунтарса кĕллетнĕ ялăн
Хушшипе çилсем вĕрсен,
Кăмăкасем çинче йăл-ялăн
Ялкăшаççĕ вут-хĕмсем.

Танк алтса хăварнă çулăн
Варринче выртать ача,
Пуçĕ çук ун, ихĕ хулĕ
Тата пĕр алли анчах...

Куççульне шăлса ват карчăк
Малалла хистет хăйне,
Сÿллĕ сăрт çине хăпарчĕ,
Ларчĕ пысăк чул çине.

Хĕрелсе тухăç хĕвелĕн
Йăмăх хĕрлĕ çуттинче
Курчĕ вăл: епле инкеклĕ
Тăрса юлнă мĕн тĕнче.

Кăкăртан та çÿллĕ ÿснĕ
Çăп-çăра тырра кунтан
Таптаса усаллăн иртнĕ
Çĕрçăтман хура тăшман.

Хир çара. Пăхма хăрушă.
Шăлтăк-шатăклă хирте
Тырă суннă, пусă, пушă,
Пуçтараймăн пĕр кĕлте.

Терт те тÿснĕ, хур та курнă,
Хĕсĕннĕ хăш чух чĕре,
Вар-вар урлă, сăрт-сăрт урлă
Утнă ĕмĕр-ĕмĕрех.

Вăл илтменччĕ чĕр этемĕн
Куç-пуçне чавнисене,
Ирсĕр вăрă урăçсемĕн
Сынсене çунтарнине.

Хăйĕн хуçăпе ват карчăк
Курчĕ, çавăнпа ирех
Вăйĕ пур тăран туттарчĕ
Ывăлĕ тăран çĕре.

Ывăлĕ те савнă кинĕ
Унăн аслă вăрманта,
Çавăнта вĕсен халь килĕ,
Кÿршĕ-аршă çавăнта.

Хăнана чĕнни—кĕрхи ĕç,
Хăнана чĕнăн—тивлет.
Çук, пулмарĕ... Урнă нимĕç
Алхасса хăна сÿрет.

Анчах, урнă выçă кайкăр,
Лекмĕ ним те çăварна.
Ывăлне хăна тумашкăн
Карчăк тухнă вăрмана.

Сылтăм аллинче — хуранĕ,
Пĕр авăн — хуранĕнче.
Карчăкăн тăван вăрманĕ
Каш-кашларĕ умĕнче.

Акă вĕтлĕх, акă шурлăх,
Акă тĕтĕм пек тĕтре.
Чăтлăх витĕр, тĕм-тĕм урлă
Ватă çын утать хитре.

Катăк сарă шăлĕ витĕр
Йăкăрса шăхăрнине
Ывăлĕ те киленĕ илтчĕр,
Алă паччăр амăшне.

Вăрманта мĕн сывлăш уçă,
Сасă сăнă пек каять.
Чăштăртатрĕ акă çулçă...
Ывăлĕ сиксе тухать.

Пĕр енче иккен граната,
Тепринче иккен пăшал.
Ывăль çамрăк, амăш ватă,
Аллисем пĕр пек ăшах.

* * *

Икĕ кун-и, виçĕ кун-и
Пурăннă хăвасланса;
Ывăлĕ те савнă кинĕ
Пăхнă кăмăллăн, ансат.

Ватă карчăк халĕ акă
Тавăрнать. Вĕçет тусан.
Çулĕ уçă. Çулĕ тăкăр.
Аллинче çаплах хуран.

Шăлтăр-шăлтăр, кăлтăр-кăлтăр
Вăркăнать мотоциклет.
Кам хурахĕ урăх пултăр?
Чăн эрел-тăшман килет.

Ситрĕ, сикрĕ-анчĕ нимĕç,
Карчăкран ыйтать:
— Ăçтан?
—Карчăксем ăçта халь çурĕç...
Паллă ĕнтĕ, вăрмантан.

—Вăрманта эс мĕн-мĕн туран?
Ан кĕттер, калаç кĕскен!
— Пăрăва тырарăм. Урăх
Карчăкăн ĕçĕ мĕскер...

— Эсĕ ман умра хăран-и?
Аллунта мĕншĕн хуран? —
Ыйтрĕ нимĕç.

— Э... хуран-и?
Терĕ карчăк, —
Мĕ, ăнлан!

Хуранпа çапса ват карчăк
Çурчĕ нимĕç çамкине,
Çĕнĕрен калла уттарчĕ
Сĕм хура вăрман ăшне.

УХСАЙ ЯККАВЕ.

МТС-ри стахановецсем

КУКЕС. Машинно-тракторнăй станцинчи тăлай трактористсем, машиноведсем, комбайнерсем ишăçăнчен те пысăк хастарлăхпа ĕçлесе, çулталăкри производство планĕсене ăнăçлăн тултарчĕç. Виççĕмĕш бригадăн план тăрăх 1300 гектар суха ламалла пулнă пулсан, 1306 гектар суханă. Елена Кудрявцева трактористка хăйĕн нормине иртерсе тултарнă, 336 килограмм горючи перекетленĕ.

Тракторист П. Викторов юлташ 200 гектар сухалас вырăнне 326 гектар сухаласа 324 килограмм горючи, Н. Николаев юлташ 337 гектар сухаласа 261 килограмм горючи перекетленĕ. П. Яковлев юлташăн норма тăрăх 180 гектар çинчи тырпула комбайнпа пухса кĕмелле пулнă пулсан, вăл 215 гектар çĕр çинчи тырпула пухса кĕнĕ.

Машиноведсем те паха примерсем кăтартаççĕ. А. Степанов машиновед 450 тонна тырă çапас вырăнне 467 тонна çапнă.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Тракторсене юсама пунктсем организацилеме

ИĔПРЕÇ. Машинно-тракторнăй станци тракторсемпе ытти машинăсене юсама тĕплĕн хатĕрленсе тытăнчĕ. Ремонтра ĕçлекен рабочисем кăçал запаслă пайсене хăйсемех тăвассине анлăн пуçарса пыраççĕ. Çавнашкалах МТС-ăн шалти ресурсĕсемпе те анлăн усă курасçĕ.

Ихтĕмĕшпе тăхăрмĕш бригадăсем тракторсене вырăнсенчех юсама палăртнă. Эпĕçре, «Чувашия» колхозра, трактор юсаса пĕтерчĕç.

МТС кăçал хăшпĕр бригадăсенчи тракторсене вырăнсенчех юсама палăртнă. Эпĕçре, «Чувашия» колхозра, Кĕлĕмкассипе Туçара ремонтнăй пунктсем организацилеме. Тракторсене юсасси çав пунктсенче те йĕркеллĕн пулса пырать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ялхуçалăх çулĕн хăшпĕр итогĕсем

1941 çул колхозсене организаципе хуçалăх енчен çирĕплетес, тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе палăрăç çулталăк пулса тăчĕ. Ана эпир ялхуçалăх çулĕн хăшпĕр итогĕсенчен лайăх куратпăр. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă историллĕ решенине пурнăçа кĕртсе пынă май, чылай колхозсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Çакă вăл чи малтанах колхозниксен анлă масси тăрăшса, вăя хурса ĕçленинчен, çавна пула тырпула вăхăтра акса, кĕске вăхăт хушшинче пухса кĕнинчен килчĕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан, Пренешри «1-ое Мая», Турханти «Комбинат» т. ыт. колхозсем çураки ĕçне пилĕкшер кун хушшинче пĕтернĕ. Районĕпе илсен те эпир çуракине вăхăтра вĕçлерĕмĕр, çураки планне те иртерсе тултартамăр. Сĕре çемçетес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса иртернĕ. Колхозсен уйĕсене 86.300 лав тислĕк, вăл шутран çурхи тырăсем акмалли вырăна 28.800 лав, 3.684 тонна торф, 3.272 центнер кĕл, 2.940 тонна фекали кăларнă т. ыт. те.

Çак мероприятисем тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе палăрăç вырăн йышăнса тăчĕç. Малтанлăха шутланă тăрăх, кăçал пирĕн район вăтам шутпа кашни гектартан 14 центнера яхăн тĕштырă туса илчĕ. Уйрăм колхозсем унтан та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илнĕ. Молгачкинăри «Молодая сила» колхоз 177 гектарлă лаптăк çинче вăтам шутпа гектартан 16 центнера яхăн, колхозри виççĕмĕш бригада (бригадирĕ Карпов юлташ) 18 центнер ытла тырă туса илнĕ. Кун пек примерсем районра сахал мар.

Кăçал колхозсем уйри тырпула кĕске срокра тата пĕр тăкăнламасăр пухса кĕртме тăрăшрĕç. Вĕсем, фашистла Германия Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла ултавлăн килсе тапăннине хирĕç, производствăлла тата политикăлла активлăха хăпартнине, ĕç тухăçлăхне нихăçанхи пек мар пысăкках ÿстернине, ĕç дисциплинине çирĕплетнине ответлерĕç. Уборкăра вăйпитти çынсем кăна мар, ваттисем те, ачасем те вăя хурса ĕçлерĕç. Çав хастарлă ĕçре двухсотниксемпе трехсотниксем чылай палăрчĕç.

«Красноармеец» колхозра чылайăшĕсем нормăсене иртерсе тултарса ĕçленĕ. Вĕсем хушшинче уйрăмăнах А. Запалова, М. Еленова, Кайнова колхозницăсем пилĕк-алă кăларкаллă çула тăракан çынсем пулнă.

Сталин юлташ доклачĕ пирки ют çĕршывсенче мĕн сыраççĕ

АМЕРИКА

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Сталин юлташ доклачĕ пирки çаплах интересленсе сыраççĕ, çакăнпа пĕрлех тата Америка правительстви хĕçпăшал таврашне кивçен е арендăна памалли закон тăрăх ССР Союзне пулăшасси çинчен йышăннă решение хапăл туса ырлаççĕ. Атлантра (Георгий штатĕнче) тухакан «Конституцион» ятлă хаçат çапла сырать: «Россия пирĕн пĕрлехи ĕçшĕн çапăçать, вăл Гитлера кашни пырса çапмассеренех Америка хавасланса савăнать. Гитлерла нацизма пĕтерес ĕçре мĕскер тума май пур, американецсен савсене пурне те тумалла».

Çакăн пекех тата «Ситизен Адвертайзер» хаçат та çапла сырать: Тăватă уйăх çурă пыракан кĕрешӳ Совет Союзĕ тăшмана хирĕç тăма пултарнине тата вăл çак кĕрешĕве пăрахма шутламаннине кăтартса пачĕ. Нацизма хирĕç кĕрешес ĕçре Совет Союзĕ Америка енчен укçа-тенкĕ пулăшăвĕ плесснине те çирĕпех шанса тăма пултарать,—тесе сырать.

.Американри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, — тет Виргини штатĕнче тухса тăракан тепĕр хаçат,—вырăссене пулăшас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хумалла, мĕншĕн тесен вырăс фрончĕ хальхи вăхăтра нимĕçсене çапса çĕмĕрес тĕлĕшпе чи майлă вырăн пулса тăрать.

Тронхеймра (Род Айленд) тухакан «Бюллетень» хаçат: «Сталинăн юлашки сăмахĕ Совет Союзĕ тăшмана хирĕç кĕрешессинче малалла та çирĕп тăма шутланине кăтартса парать. Ленинградпа Мускава çăлса хăваракан çирĕп вăйсемех гитлеризма çапса çĕмĕрес ĕçе те туса хурĕç»,—тесе сырать.

Çав вăхăтрах тата: «Вырăс çарĕсен ударлă вăйне çирĕплетес тĕлĕшпе Америкăпа Англин мĕскер тума маннĕ пур, çавсене пурне те тумалла» тесо вĕçлет хăйĕн статьине.

ВЕНГРИЯ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Сталин юлташ доклачĕ Венгрири предприятисенче ĕçлекен рабочисене пит те хаваластарса янă. Будапештри пысăк заводсенче ĕçлекен рабочисем Сталин юлташ доклачĕ çинчен ноябрĕн 7-мĕшĕнче ирхинех пĕлнĕ. Сталин юлташ докладне радиопа итленĕ çынсене ниçта утма та паман, вĕсене хупăрла-хупăрла илсе ыйтса пĕлме тăрăшнă. Вĕсен пĕр доклад сăмахĕсенех вуншар хутчен каласа пама лекнĕ. Венгри рабочийĕсене уйрăмăнах Сталин юлташ Германин Европари тылĕ çирĕп марри çинчен калани интереслентернĕ. Пĕр рабочи çапла калать: «Германи союзниĕсемех хăйсен хĕçпăлăсене Германие хирĕç çавăрас пулсан, ун чух вара мĕскер тăвĕччĕç-ши поляксем, французсем, норвежецсем тата Гитлер чуралăха кĕртсе ӳкернĕ ытти халăхсем те? Вырăссем контрнаступлени пуçласан, нимĕç çарĕсем тинех парăнса чакма пуçлĕçĕ»,—тенĕ.

Будапештри пароходсем тăвакан верфьре пĕр ушкăн рабочи хăйсем шаннă юлташĕсем хушшинче çакăн пек сырнă резолюци салатнă:

«Эпир, тӳрĕ венгер рабочийĕсем, Германи ССР Союзне хирĕç пуçланă вăрçа—усал шухăшлă вăрçă, варварла, тĕрĕслĕхлĕ мар вăрçă тесе шутлатпăр. Çакна пула эпир çак вăрçа /Венгри хутшăннине пушшех те тĕрĕс мар тетпĕр.

Эпир хамăр правительствăран çакна ыйтатпăр: мĕскер кирлĕ-ши пире ССР Союзĕнчен? Мĕншĕн вилеççĕ-ха пирĕн тăвансем вырăссен фронтĕнче? Эпир хамăр сассăмăра англичансемпе американецсен сасси çумне хушатпăр:— Гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешмешкĕн Совет Союзне пулăшар! Гитлера вилĕм, унăн юнлă бандине—вилĕм!»

ЧЕХОСЛОВАКИЯ

БЕРН, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташ ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче туна доклада Чехословакире пысăк хаваслăхпа йышăнса илнĕ. Мускавран паракан радиопередачăсене итленĕшĕн хыттăн айăпланинне пăхмасăрах, нумай чех çыннисем Сталин юлташ докладне лайăх итленĕ. Прага хулинче ноябрĕн 6-мĕшĕнче каçхинех стенографине илнĕ Сталин юлташ докладне шапирографпа нумайлатса, халăх хушшинче салатнă. Ăна Брно, Кладно тата ытти хуласенче те сарнă.

Чехословакирен пынă çынсем Сталин юлташ доклачĕ чех халăхне пысăк хаваслăх, паттăрлăх пани çинчен тата ирсĕр Гитлера çĕнтересси инçе маррине ĕнентерекен шанчăк пани çинчен каласа пĕлтереççĕ.

Чехословакирен ноябрĕн 9-мĕшĕнче çеç хăтăлса тухнă Т. ятлă инженер çапла каласа парать: «Сталин доклад тунă чух эпĕ Чехословакире пултăм. Мускавра Сталин сăмахпа тухмалла тенине пĕлсенех, Чехословакире Гитлер лартнă Гейдрихăн наместникĕсем пĕтĕм рабочи районсенче, Мускавран радио итлекенсене тытас тесе, облавăсем тума пуçларĕç. Ухтарусем туни нимĕнех паман пулин те, нумай рабочисене тытса хупрĕç. Çапла гитлеровецсем хăйсен çиллине айăпсăр рабочисене арестленипе сирсе яма шутларĕç. Çакна пăхмасăрах Пильзенри рабочисенчен нумайĕшĕ Сталин доклачĕн содержанине пĕтĕмĕшпех пĕлнĕ. Манпа тĕл пулса калаçнă чехсем пурте пĕр шухăшпа килĕшеççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, Совет Союзĕ паттăрăн кĕрешнине пула Гитлер вăйĕ пĕтесси пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Çакăнпа пĕрлех Чехословакире çакна та пĕлсе тăраççĕ: Сталин юлташ доклачĕ тата çак доклад кăларса тăратакан пысăк задачăсем чехословаксене тата пусмăрлăхри ытти халăхсене те, фашистла çынçиенсене хирĕç кĕрешес ĕçе татах та ытларах вăйлатма хушаççĕ».

Фашистсен Норвегири террорĕ

Оккупантсем халăха асаплантарнине хирĕçлесе юлашки вăхăтра. Норвегире çĕнĕ демонстрацисен хумĕ хускалса кайнă. Нимĕç фашисчĕсем 6 рабочие тискерле асаплантарса персе пăрахнине хирĕç протестлесе, ноябрĕн 4, 5, 6-мĕшĕсенче Норвеги хулисенче нумайĕшĕнче митингсем пулса иртнĕ. Норвегин телеграф бюровĕн сăмахĕсем тăрăх, çав 6 рабочи Англие тарса норвежецсен унти çарне кĕме шутланă. Револьверсемпе хĕçпăшалланса, çав рабочисем нимĕçсем контроль туса тăракан пароходсенчен пĕринче трюм ăшне пытанса ларнă. Пароход уçă тинĕсе тухсан, çав рабочисем ăна хăйсен аллине тытса илнĕ те Исланди çыранĕсем патнелле илсе пынă. Усал çанталăк пулнă май пароходе нимĕçсен патруль тăвакан судни пырса чарнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 3-мĕшĕнче Норвегин çав патриочĕсене пытарнă кун ĕçе тухман рабочисене халь нумайĕшне арестленĕ. (ТАСС).

Нейтралитет çинчен калакан закона улăштарнă

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, представительсен палати, Америка суту-илӳ парохочĕсене вăрçă зонисене кĕме май парас шутпа, нейтралитет çинчен калакан закона улăштарасси çинчен закон проектне йышăннă.

Палатăн решенине Рузвельт ырланă

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, представительсен палати йышăнни çинчен шурă çуртра паллă пулсанах, Рузвельт представительсен палатин председательне Рейберна тата демократсен сенатри лидерне Мак-Кольмана таврă тунă. Шурă çурт секретарĕ: представительсен палати йышăннине президент кăмăллать, тесе калать.

Конгресс решенийĕсем çинчен калать чух Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл: çакă вăл питĕ те паха тата вăхăтра тунă мероприяти пулса тăрать, тенĕ. Американ суту-илӳ парохочĕсене хĕçпăлланторас тĕлĕппе тинĕс министерстви мерăсем йышăнать те ĕнтĕ. Тинĕс министрĕ Нокс çапла калать: Çĕнĕ решени Гитлера хирĕç кĕрешекенсене валли кирлĕ таран çар материалĕсем тăратас ĕçре суднăсемпе тата çынсемпе усă курма май парать.

США-ра Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулни

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Хаçатсенче пĕлтернĕ тăрăх, Детройт хулинче митинг пулса иртнĕ. Митинга 3000 çын ытла пухăннă. Митингри халăх ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Калинин юлташ патне яма пит пысăк хаваспа саламлă телеграмма йышăннă. Мичиган штачĕн губернаторĕ Ван-Вагонер митингри халăх патне телеграмма янă. Унта вăл çапла сырнă: «Россия Гитлерăн çарĕсене хирĕç туса пыракан паттăр кĕрешӳ — вăл пирĕн кĕрешӳ», тенĕ. Губернатор американецсене ССР Союзне чи пысăк пулăшу пама чĕннĕ: Митингра çавăн пекех Детройт хули мэрĕн Джофферсăн саламне те вуласа панă.

Норвеги консулĕ Хамбро митингра тухса çапла калать: «Россия халхи тĕнчери демократин чи паха символĕ», тенĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Чикаго хулинчи паллă обществăллă деятельсен группи Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхне ырă сунса салам янă. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн геройла кĕрешĕвне хăмăлтан мухтанă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă ятпа Бостон хулинче митинг пулса иртнĕ. Митингра тĕрлĕ организацисен представителĕсем 2000 çын ытла пулнă. Митинг участникĕсем совет халăхне ырă сунса салам янă.

«Русское слово» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Детройт хулинче пурăнакан сербсен митингĕ пулса иртнĕ. Митинг участникĕсем Сталин юлташ патне яма саламлă сыру йышăннă. Унта вĕсем çапла калана: «Эпир, Америкăра пурăнакан сербсем — Сире, Хĕрлĕ Çара тата пĕтĕм совет халăхне ырă сунса хĕрулле салам яратпăр. Эпир Сирĕнпе пĕрле тăрса татăклă çĕнтерӳ тăвичченех кĕрешме пулатпăр. Эпир Совет Союзне хирти лазарет яма йышăнтăмăр, унăр пуçне тата Совет Союзне пулăшмалли фонда 3000 доллар хыватпăр. Хĕрлĕ Çар пĕтĕм тĕнчери мĕнпур славян халăхĕсен интересĕсемшĕн çапăçать», — тенĕ.

«Новое русское слово» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм тĕнчипе паллă композитор — пианист Рахманинов Совет Союзне медицина тĕлĕшпе пулăшса тăмалли фонда 4.000 доллар укçа панă.

Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: халĕ Детройт хулинчи киногеатрсенчен пĕринче совет кино-фильмĕ — «Чкалов» пырать. Пухăннă укçана пĕтĕмпех ССР Союзне пулăшмалли фонда хывaççĕ.

Англире Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулни

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Кăнтăр Англири пĕр пысăк çар заводĕнче ĕçлекен рабочисем срокран иртерсе 2 сехет хушши ĕçленĕ. Çак икĕ сехетшĕн тивекен ĕç укçине вĕсем Совет Союзне медицина тĕлĕшпе пулăшмалли фонда панă. Рабочисем çавăн пек тата тепĕр хут ĕçлесе иртерме йышăннă. Ун чухне тивес ĕç укçине те çав фондах панă пулнă.

Англи министрĕ ССР Союзне пулăшасси çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: вăрçă вăхăтĕнчи транспорт министрĕ Лорд Лезерс Совет Союзне Англи енчен пулăшасси пирки сăмах хускатса, çапла калать: «Вырăссем тăшмана хирĕç паттăрăн тăни пирĕн хамăрăн мĕнпур вăя пухса вырăссене вăй çитнĕ таранах пулăшма май парать. Мускавра панă обязательствăсем йăлтах пурнăçа кĕрсе пырасçĕ. Пулăшу парас ĕçе татах та тĕплĕнрех шухăшласа туса пымалла. Халĕ çар материалĕсене йĕркеллĕ ярса тăма тата вĕсене турттарма мĕн кирлине пурне те туса хатĕрленĕ. Эпĕ сире тĕплĕн пĕлтерес пулсан, çав питех те пысăк программа сире тĕлĕнтерсе савăнтарнă пулĕччĕ. Эпĕ çакăн çинчен кăна калама пултаратăп, эпĕ тоннаж мĕн чухлĕ кирлине палăртса хутăм, пирĕншĕн йывăрлăхсем пулсан та, суднăсем çитменни пулас çук, эпир хамăр сăмаха пурнăçа кĕртĕпĕр. Эпир çар материалĕсене хăвăрт тата хăрушлăхсăр Россипйăна çитерме кирлĕ мерăсене пурне те йышăнăпăр. Эпир кирлĕ таварсене вăхăтра çитерсе тăрăпăр. Вĕсенчен нумайĕшĕсем Россипйăна çитнĕ те ĕнтĕ, чылайăш шайĕ—çул çинче, малашне эпир татах та нумайрах таварсем ярăпăр».

США сентябрь уйăхĕнче тунă тулашри суту-илӳ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). США-н суту-илӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх, пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнче экспорт 295 миллион долларлăх пулнă пулсан, сентябрь уйăхĕнче кăçал экспорт 417 миллион долларлăх, август уйăхĕнче 455 миллионлăх пулнă Импорт сентябрь уйăхĕнче 263 миллион долларлăх, август уйăхĕнче 283 миллионлăх пулнă, пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнче импорт 195 миллион долларлăх кăна пулнă.

Августпа танлаштарсан, тимĕр, хурçă, машина тата автомобиль экспорчĕ чакнă. Çав вăхăтрах продовольстви экспорчĕ иртнĕ çулхи пур уйăхрисенчен те 50 миллион долларлăх ытларах пулнă.

Сербири лару-тăру

СТАМБУЛ, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Югославин Стамбулри çыннисем хушшинче çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсем Югославире тытăнса юлнă партисемпе çыхăну тытас ĕçе йĕркелеме тата вĕсен хушшинчен Германие пулăшакан кадрсем пухса хатĕрлеме хăтланни йăлтах арканса кайнă. Льотика «партин» сапаланса пĕтнĕ пĕчĕк групписем кăна оккупантсене пулăшса пыма килĕшнĕ. Çак парти Югославире нихăçан та политикăлла влияниле усă курман. Германи Югослави çĕршывне оккупацилеттен скупщинăна суйлануна чухне Льотика партийĕ 30 сасă кăна пухма пултарнă тата аран-аран пĕр депутата кĕртнĕ. Нимĕçсем оккупацилене хыççăн çав парти пĕчĕк ушкăнсене саланса кайнă, халĕ çав ушкăнсемпе оккупантсем усă кураççĕ. Недич кабинечĕн составĕнче Льотика организацин темиçе представителĕ шутланать. Недич кăларса тăракан хаçатсен кадрĕсем те çав партин членĕсенчен тăраççĕ.

Халĕ кăна Белградран килнĕ çынсем çапла пĕлтереççĕ: Недич «правительстви» Сербири чылай районсенче чугунçул тăрăх çурессине пăрахăçа кăларнă. Мĕншĕн тесен Недич «правительствин» çав районсенче чугунçул линийĕсене çĕмĕрекен партизансен отрячĕсене пĕтерме вăйĕ çитмест. Çак кунсенче чугунçулсен дирекцийĕ Пароховo-Ниш, çавнашкалах Младо Невасе, Лайковац хушшинче çурекен поездсене çуреме чарса лартни çинчен пĕлтернĕ. Югославирен килнисем пĕлтерчĕ тăрăх, ноябрĕн пĕрремĕш числисем тĕлĕнче центральнăй Сербин районĕсенче, çавнашкалах тата Петровац, Александровац (Хĕвелтухăç Серби) районĕсенче те партизансемпе Германи войскисем хушшинче пысăк çапăçусем пулса иртнĕ.

Нимĕçсем Сербири партизанла движение хирĕç кĕрешме пултараймаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ютçĕршыври çар çыннисем хушшинче нимĕçсем Сербири партизанла вăрçа пĕтерсе тăкас шутпа, партизансем вырнаçнă çĕре парашютистсен отрячĕсене антарса хăварни çинчен калакан хыпар çӳрет. Анчах нимĕçсем партизансене пĕтерме хăтланни ăнăçсăр пулнă. Корреспондент кăтартса панă тăрăх, хальхи вăхăтра партизансем, сентябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, чылай пысăк территорине контроль туса тăраççĕ. Партизансен аллинче уйрăм провинцисем те пур.

Греците выçлăх

Турци хаçачĕсем нумаях пулмасть Грецирен тавăрăннă обществăлла деятельсем унти лару-тăру çинчен каласа панине пичетлесе кăларнă: — Эпĕ Грецире тӳссе ирттерни унти пурнăç пирки çырнисенчен темиçе çĕр хут усалтарах. Мана унта тамăкра çӳренĕ пек туйăнчĕ, — тенĕ çул çӳрекен туроксенчен пĕри.—Пирĕн пароход комманди çĕр çине ансан, темиçе çĕр çын хупăрласа илчĕ. Пурте: «Пĕр татăк та пулин çăкăр парăр пире. Эпир выçă вилетпĕр»,—тесе кăшкăраççĕ. Эпир урамсенче тĕл пулнă çынсем пурте вилнĕ çынсен кĕлеткисем пек çӳреççĕ. Афины хулинче выçăпа аптăраса кунсерен 20 çынран кая мар вилет». (ТАСС).

Фашистсем тĕнчери пур тĕнсене те пĕтерсе лартма шутлаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть Рузвельт хăй тухса калană сăмахра нацистсем тĕнчери тĕнсене пĕтерес шутпа вăрттăн план тунă тесе каланăччĕ. Халĕ Америкăри «Райт» ятлă журнал çав вăрттăн плана ничетлесе кăларнă. Ку планран çакă курăнса тăрать: Германи фашисчĕсем тĕнчере пĕр Германи империйĕн напи тĕнне тума шутлаççĕ, ку тĕн вара мĕнпур ытти тĕнсене пурне те пĕтерсе лартмалла. Çав планра библи кĕнекине кăларма тата ăна урăх çĕршывсенчен илсе тăма та чарма палăртса хунă.

Италин Вăтаçĕр тинĕсри çухатăвĕсем

СТАМБУЛ, ноябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Сирирен çапла пĕлтереççĕ: фашистла Итали Вăтаçĕр тинĕсре питех те пысăк йывăрлăхсем тӳсет. Италин Сирине çаклакан суднисен караванĕсене Англи тинĕсрен те, сывлăшран та тăтăшах атакăлана пирки, Италин суту-илӳ флочĕ хăй тоннажĕн çурринне çухатнă. Юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна Италин суту-илӳ енĕпе çӳрекен 59 суднине путарнă тата 12 суднăна чылаях сиенленĕ. Çавна май итальянецсем конвой туса пыракан çар карапĕсен йышне ӳстерме палăртнă. Халĕ вара пысăк мар каравансене, гидросамолетсене шута илмесĕр, 20 таран миноносецсем, эсминецсем тата хăвăрт çӳрекен катерсем сыхласа пынине час-часах курма пулать. Анчах, çакăн пек мерăсем йышăннă пулсан та, итальянецсем çапла кун вăтам шутпа суту-илӳ енĕпе çӳрекен пĕрер суднине çухатаççĕ. Вăрçă пуçланиччен Италин суту-илӳ флочĕн тоннажĕ 3 миллион тонна шутланнă, вĕсенчен 1.300 пин тоннине Италия вăрçа хутшăннă хыççăн нейтральнăй çĕршывсен порчĕсенче тытса чарнă, 850 пин тоннине вара англичансем Вăтаçĕр тинĕсре путарнă.

Çапла вара суту-илӳ флочĕн юлашкийĕсем, хальхи вăхăтри пекех пĕтсе пырсан, вăл Италине чи кĕске вăхăтлăха кăна çитме пултарнине пĕлтерет.

Итали танкерне путарнă

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 6-мĕшĕнче Хура тинĕсре Италин «Татчелло» танкерне путарнă.

Италипе Германи суднисене Вăтаçĕр тинĕсре путарнă

Вăтаçĕр тинĕсре ноябрĕн 9-мĕшĕнче çĕрле пулса иртнĕ операцисенче Англин тинĕс-çар флочĕ пĕтерсе тăкнă суднăсен 2 караванĕпе пĕрле тĕнĕл держависен Ливие каякан салтакĕсем темиçе пине çити пĕтнĕ, тесе шутлаççĕ. Çав шыва путарнă суднăсенчен вуннăшĕ танксем, тупăсем, грузовиксем тата боеприпассем турттарса пынă пулнă. Çаксем пурте суднăсем çинчи войскăсемпе пĕрле тинĕсе путнă.

Çăм запасне конфискацилеНĕ

Женевăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 11-мĕшĕнче Германире халăх аллинчи мĕнпур çăм запасне конфискацилесси çинчен официальнăй распоряжени пичетлесе кăларнă.

Хаçатсем çакна палăртса хăвараççĕ: ку распоряжени вăл — Хĕвелтухăç фронтĕнче пуçса ларнă çарсене валли хĕллехи тумтир хатĕрлесе параç тесе кая юлса хăтланса пăхни пулса тăрать, — теççĕ. (ТАСС).

РАЙСОВЕТ СЕССИЙĔ

КАНАШ. Ноябрĕн 14-мĕш. **(Телефонпа).** Çак кунсенче райсоветăн IX-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сессире райком секретарĕ Репкин юлташ Сталин юлташ докладне май вырăнти советсен умĕнче мĕнле задачăсем тăни çинчен доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн депутатсем районра фронта пулăшу парас ĕç мĕнле пыни çинчен, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа тырасси çинчен калаçрĕç. Сесси государство умĕнчи тырпул обязательствине кĕске срокрах парса татма тата IV-мĕш кварталти финанс планне срокчен тӳлесе татма хушса, çавăн пекех промысла артелĕсен халăха кирлĕ таварсем ытларах туса хăлармаллине палăртса татăклă решени йышăнчĕ.

К. КОРНИЛОВ.

ФЕЛЬЕТОН

САЛТЫКОВ-ЩЕДРИН ТАТА ВИЛЬГЕЛЬМ ЭЛЬМАН

Ефрейтор Вильгельм Эльманăн сарă çӳçĕсем вирелле тăрса, куçĕсем чарăлса, куç харшисем хăпарса карĕç. Кăвак хуçне вăл кĕнеке çинчен пӳлĕмри виçĕ салтак çине куçарчĕ.

— Мĕн ку?—шупкарах сарă хуплашкаллă кĕнекине силлесе ыйтрĕ вăл.

— Пуçелĕк!—терĕ пĕр салтакĕ, 16 çула кĕнĕ ача сăнли, çинçе сасăпа.

— Кĕнеке!—терĕ пĕрколенчĕк сăнпитли мухмăр тытнă сасăпа.

— Çытар вырăнне пуç айне кĕнекесем хурса выртрăмăр. Вĕсене учитель шкапĕнчен тустарса килнĕччĕ.., шкул библиотекин кĕнекисем,—ăнлантарса пачĕ виççĕмĕшĕ.

Хăйне иккĕлентернĕ строкасене тепĕр хут вулама тытăнчĕ ефрейтор.

«Хăй шухăшĕсене проект авторĕ,— тенĕ унта,—çапла çырса хунă. Çакăн йышши çынсене персе пăрахсан усăсăр пулмĕ: чи малтан, пирĕнпе килĕшмесĕр шухăшлаканнисене; иккĕмĕшĕнчен, хăйсене пытанчăклă тыткалаканнисемпе хăйсен шухăшĕсене палăртманнисене; виççĕмĕшĕнчен, салхуллă сăн-пуçпа сӳресе лайăх шухăшлă обывательсен кăмăлĕсене ӳкерекенисене; тăваттăмĕшĕнчен, шăлăренсемпе газетчиксене»...

—Ха!.. Чăнах фюрер çинчен пулас? Вĕсем паянхи Германири законсем çинчен çапла çыраççĕ ĕнтĕ. Ыттисем те ку «Дневник провинциала в Петербурге» тенĕ кĕнеке пекех-ши? Интересно!—тесе «Полное собрание сочинений М. Е. Салтыкова—Щедрина» тенĕ кĕнекесен тепĕр томне варринчен уçса, куçĕ тĕлне пулнă строкасене вулама тытăнчĕ вăл:

«Пырса çитрĕ те начальник хăй вырăнне, пуçларĕ сăтăрлама. Пĕр çул сăтăрлать, икĕ çул сăтăрлать... Халăха апат-çимĕç тăратас ĕçе чарса лартрĕ, халăхăн сывлăхне упрас ĕçе пĕтерсе хучĕ, наукăсене çунтарса ячĕ, кĕлне çилпе вĕçтерсе ячĕ. Виççĕмĕш çул çине кайсан вăл хăй тунă пек ĕçсем çине çавăрăнса пăхрĕ: чип-чипер, йĕркеллех пулсан ĕнтĕ, шанса панă крайăн чечекленме те пуçламалла, анчах вăл»...

— Тем тесен те ун çинченех! Юптарса çырнă,—терĕ Вильгельм.—Иш, шуйттан! Çавсене çыраканни хамăн аллăма лексен чĕлхине, хăлхине, сăмсине каса-каса илĕттĕм, хуçĕсене чавса кăларнă пулăттăм. Коммунист ĕнтĕ вăл.

Тепĕр кĕнехине варринчен уçса вуласа пăхать:

«Эсир—манăн чĕре суйласа илнисем! Кайăр та шăлсем акса тухăр, янахсене çĕмĕрĕр, çутçанталăхран пушă хир туса хурăр! Сирĕн ăнăçлă ĕçĕрсене эпĕ хаваласпах пăхса тăрăп».

— Кĕнеки ятне «Помпадуры и помпадурши» тенĕ, хăй пирĕн Гитлерпа национал-социалистсем çинчен çырать. Чее! Ыттисенче те çавсем çинченех çырнă пулмалла,—терĕ тепĕр кĕнекине тытса.— «Вĕсем тĕнчерен пушă хир туса хурасшăн каççах каяççĕ, анчах ун йышши административнăй ĕçсем хыççăн мĕн пуласси çинчен шухăшламашкăн пачах пĕлмеççĕ», тенĕ. «Да-а! Пĕлетпĕр кам çинчен çырнине! Ку кĕнекене тата «Письмо к тетеньке» тесе ят панă. Мĕн çинчен çырать-ши мăшкăллама юратакан автор хăйĕн инкĕшĕ патне?

«Вăл кунсерен хăйĕнне перет, унăн ирсĕр хаçачĕсене камсем вуламаççĕ—пурте çавсем унăн тăшманĕсем тата патшалăх тытăмне ишĕлтерекенсем пулса тăраççĕ»... Хăйсем юратман Геббельс çинчен ĕнтĕ ку. Лайăх кăтартнă пулĕччĕç сана çакăн пек çырнăшăн пирĕн патшалăха,—терĕ куçа курăнман Салтыков-Щедрина юнаса.—Ку тата... «Письма за рубежом» тенĕ. Вуласа пăхар:

«Пруссаксем вĕсен нӳхрепĕсенче усраннă эрехе пĕтĕмĕшпех ĕçсе пĕтернĕ, сигарĕсене туртса янă, шкапсенчи кĕпе-тумтирсене, посудăсене, кĕмĕлсене вăрласа пĕтернĕ»,—тенĕ. Татах уçса вуласа пăхар: «Удавпа Дыба ыттисене шухăшлаттарасшăн мар, ыттисен вĕсем çырса тунă программăна пурнăçласа пырас тутлă шăпапах пурăнмалла». Тĕрĕс! Салтакăн устав тăрăх шухăшлама юрамасть. Вĕсемшĕн шухăшлама пуçлăхсем пур. Ой, фюрера «Удав» тенĕ, «Дыба» тени Риббентроп пули-ха, те Геббельс-ха?.. Пĕлме йывăр. Юптарса çырнă.

Икĕ листа уçсан, Вильгельм куçĕ çак строкасем çине ӳкрĕ:

«Берлинра одеяло туянма пулать, анчах кăнтăрла выrăн çине сарса хума юрăхлине мар; резинăран тунă мячик туянма пулать, анчах пуян мар çынсен ачисене выляма юрăхлине кăна; юлашкинчен Берлинра колбаса туянма пулать, анчах ку ырă суннă çынна хăнăнă чух çитермелли мар, нушаран çын çурасран питĕрĕнсе тăр пĕччен ларса çимелли çеç, çисен кайран вар-хырăму ыратма чарăнсанах çинине манатăн». Ку эрзацсем çинчен ĕнтĕ. Кĕнекине «Письма за рубежом» тесе ят панă. Кунта юптарса мар, тӳрех çырнă,—«Берлинра» тенĕ.

«Хальхи вăхăтра Германире пурăнакан халăхран çурри Берлин хулине юратмасть çеç мар-ха, кураймасть. Кашнинченех вĕсен Берлин мĕн те пулин туртса илнĕ, хирĕç нимĕн те тавăрса паман. Çитменнине Берлин хăйĕн салтакĕсене пур çĕре те тăратса тултарнă». Манăн савнă Лоттена турттса илчĕç, случной пункта вырнаçтарчĕç. Да, тĕрĕс çырать... — Эльман хăй шухăшĕнчен хăй хăраса ӳкрĕ, салтаксем çине чăрр пăхса илчĕ, лешсем лăпкă тăнине кура лăпланчĕ. Тата тепĕр листа уçса вулама тытăнчĕ.

«Берлинра именесси вырăнне—харпăрхăй çинчен нумай шухăшласси, политикăран пăрăнас вырăнне — виçерен тухса пĕтĕм тĕнчен пуçĕ пулса тăма тăрăшасси малта пырать», тенĕ. Ку та тĕрĕс. Апла пулин те ун çинчен çырнине вулама юрамасть,—тесе шухăшласа илнĕ хыççăн, Эльман виçĕ салтак еннелле çавăрăнса тăчĕ, вулама юраман кĕнекесене пуç айне хурса выртнăйăн вăрçма пуçларĕ вĕсене.

— Çакса вĕлересседе кĕтетĕр-и? — тет. Начальствăна систерессипе хăратать.

Вăрçсан-вăрçсан, унăн тепĕр кĕнекине пăхас килчĕ. Тепĕр кĕнеки Салтыков—Щедринăн «История одного города» ятли пулнă.

Кама тĕл пулнă, çавна çĕр питĕнчен тăлса тăкасшăн, пĕтĕм тĕнчене казармăсемпе тултарасшăн, мĕнпур халăха асап кăтартасшăн тата тумтир тăхăнтарса маршировка тутарса усрасшăн çунакан Угрюм-Бурчеев çинчен вулана чух Эльман умне Гитлер сăнсăпачĕ чĕп-чĕррĕн тухса тăнăн туйăнать.

— Мĕн вулан?—илтĕнчĕ рота командирĕ Швейнкопфăн мухмăрлă сасси.

Эльман тутисемпе мăк-мак тукаларĕ те нимех те калаймарĕ.

— Кӳр-ха!—кĕнеке Швейнкопф аллине куçрĕ.

Ефрейтор хĕрелсе кайрĕ. Кăшт тăхтасан, сапаланса кайнă тăнĕ-пуçĕ пухăнсан, Эльман хăйĕн салтакĕсем çав кĕнекесене пуç айне хурса выртни çинчен калама тытăнчĕ, анчах командир кайрĕ.

* * *

Шăп виçĕ кунтан суд пухăнчĕ. Айăпланакансен тенкелĕ çинче хайхи виçĕ салтак тата Эльман ефрейтор пуçĕсене усса лараççĕ, айăпĕсене йышăнмаççĕ. Салтакĕсене виççĕшне те вулама юраман кĕнекесене пуç айне хурса усранăшăн айăплаççĕ, ефрейторăн айăпĕ тата пысăкрах: ăна фюрертан мăшкăлласа çырнă произведенисене килнисех вуланăшăн çакса вĕлермелле туса хураççĕ.

Приговор хыççăн Эльман:

— Гитлер режимĕ туйманнине туйтарать, сисменнине систерет,—тесе кăшкăрса янă.

ИВАН МУЧИ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6575

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557. Ф. б. 58. 84 п. л.